"Тантăш" – çывăх тăван,
"Тетте" – шанчăклă тус,
"Самант" – виçесĕр савăнăç!
Тăван, тус, савăнăç пулсан пурăнма та пит аван!

ХЫПАР
Чăваш ачисен хаçачĕ
# Тантăш
6+
12 (4374) №, 2014, пуш, 27 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).
Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

# «Теттене» туслисем



Аксаринри пуçламăш шкул ача садне çӳрекенсем «Теттене» çав тери кăмăллаççĕ. Çавăнпа вĕсем ушкăнĕпех юратнă кăларăмне кăçалхи иккĕмĕш çур çула çырăнма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Йĕкĕреш Викăпа Лев Мадеевсем тĕрлĕ тĕспе тухса тăракан журналсăр çав тери тунсăхлаççĕ.

– Шел, уйăхне пĕр хут кăна тухать. Мĕншĕн кашни эрнере вăл пирĕн почта ешчĕкне килсе выртмасть-ши? – тет Вика шухăша путса. – Вара манран телейлĕ ача пулмĕччĕ çак тĕнчере.

– Эпир йĕкĕреш пулнăран «Теттене» хăш чухне пайлаймастпăр. Ара, пĕрин те теприн ăна пĕрремĕш алла илес килет-çке. Унти сăрласа илемлетмелли ӳкерчĕксене уйрăмах кăмăллатпăр. Аслисем пире çавăнпа тĕрлĕ тĕслĕ кăранташ илсе панă, – тет Лев та хавас кăмăлпа.

Пĕртăван Мадеевсем пысăк ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Шкула кайма пуçласан сăвă-калав çырасшăн. Чи ăнăçлисене «Теттене» ярса парас тĕллевлĕ.

– Кайран вăхăт иртсен, «Тантăшпа» та туслашăпăр. Унпа тачă çыхăну тытма пуçласан, тен, хаçат лауреачĕсем те пулса тăрăпăр-и? Ытти ачасенчен эпир нимрен те кая пулас çук. Пирĕн пултарулăха курса аслисем савăнса кăна тăччăр. Вĕсем хавхалантарса пырсан, эпир пушшех çунатланăпăр. Çакă пысăкран та пысăк çитĕнӳсем туса пыма пулăшĕ, – теççĕ хайхискерсем.

Пĕртăван Мадеевсем кун пек ăшă çанталăкра, уçă сывлăшра, «Тетте» журнала пахчана йăтса тухаççĕ. Вара ăмăртмалла ăна «шĕкĕлчеççĕ».

**_Элиза ВАЛАНС._**

Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Аксарин.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕ.**




*Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли малтанхи хакпа –*

**460 тенкĕ те 86 пус –**

*çырăнса ĕлкĕрĕр.*

*Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ӳсет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар-шăмат куна»*

**218 тенкĕ те 22 пуспа**

*çырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлетĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.*

## Паянхи кăларăмра:

**2 стр.**


*Саша Петровшăн амăшĕнчен хакли никам та çук*

**4 стр.**

*Класс уммĕнче калаçасси мĕншĕн хăратать?*

**7 стр.**

*Сергей Бармин тăванĕ Игнашевич футболист пек пуласшăн*

# Ача садĕнчи тутлă тĕлĕксем...

**Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç ача садне кăмăлпа çӳрекен чылай. «Техĕмлĕ апат çинĕ хыççăн эпĕ çывăрма юрататăп. Хăш чухне тутлă тĕлĕксем курса савăнатăп. Пĕлĕте çити вĕçетĕп, пылак кукчеçсем çиетĕп, шывра кимĕпе ишетĕп», – тет пĕри хавасланса. «Вылямалли тетте чылай пулнăран чун садикеллех туртăнать», – калаçăва хутшăнать иккĕмĕшĕ. «Манăн пысăк çын пулас килет, çавăнпа хăвăртрах вулама-çырма вĕренесчĕ. Тамара Геннадьевна Герасимова воспитателĕн сăмахĕсене кашни кун ăша хывма тăрăшатăп», – пĕлтерет виççĕмĕшĕ кăмăллăн.**



## Эпĕ текех пĕчĕк мар!

Пиллĕкри Никита Терентьев Патăрьелĕнче вĕренекен аппăшне питĕ юратать. Çавăнпа вăл киле тавăрнасса чăтăмсăррăн кĕтет.

– Аппа ăста повар пуласса шансах тăратăп. Уйрăмах вăл вермишеле тутлă пĕçерме пĕлет. Çĕр улми ăшаласси те аван пулать унăн. Эпĕ вара вĕсене кетчуппа çиме ухута, – мăнаçланать пĕчĕккскер хавасланса. – Шăллăма та çав тери юрататăп. Хальлĕхе пĕчĕк-ха вăл, аппа пулин те пăравур. Аннене питĕнчен чĕпĕтет, çӳçĕнчен туртать. Манăн çӳçе вара туртаймасть, мĕншĕн тесен кĕске вăл. Димăна хăвăртрах пысăклантарас килет. Юмахри пек пĕр каçра ӳссен мĕн тери аван пулĕччĕ. Манăн тĕрлĕ тетте нумай, анчах пĕччен выляма кичем. Дима вара хальлĕхе нимĕн те ăнкараймасть. Аллине мĕн лекет, çавна çăварне хыпасшăн. Асăрхаса кăна лармалла. Тепĕр чухне кутăнлашать, тем çитмест ăна. Йĕрмĕшет вара. Ăна юрас тесе питĕнчен те чуп тăватăп, пусĕнчен ачашлатăп.

Садике кăмăлпах çӳрет арçын ача. Уйрăмах юлташĕсемпе ӳкерме, сăрлама кăмăллать. Машинăсемпе вылясси те уншăн чун иленĕçĕ.

– Эпĕ текех пĕчĕк мар, хам хыççăн пуçтарма та вĕрентĕм. Çывăрса тăрсан вырăна тирпейлеме пĕлетĕп, апатланнă чухне пĕр-пĕринпе калаçма юраманнине те аван чухлатăп, – тет Никита.

## Аппа миçемĕш класра вĕренет-ши?

Аслисене пулăшма ăнтăлакан Артем Петуховăн та питĕ пысăкланас килет.

– Хам ята пĕлетĕп-ха, анчах хушамата манса каятăп. Тем пек ас туса юлас тетĕп, пулмасть вĕт-ха. Халĕ çине тăрса укçа пухатăп. Мĕн валлине калам-и? Джип туянас тетĕп. Вун пĕрмĕш класа çитиччен мĕн чухлĕ те пулин пуçтаратăпах. Вара кирек кама та урамра лартса çӳрĕп. Эпĕ ырă кăмăллăскер вĕт, çавăнпа çынна лайăххине çеç сунатăп, – тет арçын ача.

Аппăшне Кристинăна пулăшма та хатĕр Артем. Пĕрлех урай, кашăк-чашăк çăваççĕ. Тусан шăлаççĕ, халĕ çуркунне пахчара пĕрле кăштăртатаççĕ.

– Аппана питĕ хисеплетĕп. Анчах хăй миçемĕш класа кайнине паянхи кунччен каламасть. Манăн вара пĕлес килет. Пĕррехинче пурпĕрех йăпăлтатса ыйтса пĕлетĕпехха. Эпĕ унăн шăллĕ, çавăнпа вăл тĕрĕссине калама тивĕç, – тет Артем. – Килте кăвакалсем пур. Вĕсем кĕçех чĕпĕ кăларса пире савăнтарĕç. Каллех ĕç хутшăнать. Апатне, шывне памалла. Пĕчĕкскерсене курак тавраш тытса ан кайтăр тесе асăрхасах тăмалла.

Çуллахи куна чăтăмсăррăн кĕтет Артем. Çут çанталăка юрataканскер вăрмантан тухма та пĕлмĕ. Аслисемпе тан çырла-кăмпа пуçтарĕ, уçă сывлăшра киленсе çӳрĕ. Хăйпе пĕрле, паллах, юратнă хам хамне Линдăна илĕ.

Ксюша Суворова та Артем пекех Джек йыттине юратать.

– Чи çывăх тус вăл, манăн хӳтĕлевçĕ. Ӳкерме кăмăллатăп. Çавăнпа яланах шурă хут çине унăн сăнне куçаратăп. Асаттепе асанне мана ырласа та, хавхалантарса тăнăран ĕç те ăнăçлă пулса пырать. Уйрăмах Тамара Геннадьевна Герасимова воспитательница ăс пани килĕшет. Эпĕ пурне те пĕр пек юрататăп, маншăн вĕсем чи хаклă çынсем, – тет хĕр ача хавассăн.



## Аннерен хакли çук




– «Анне» сăмаха пĕрре кăна мар, пин хут çырма хатĕр. Маншăн анне ылтăнран та хаклăрах. Вăл пиччепе иксĕмĕре ура çине тĕрĕс-тĕкел тăратассишĕн ырми-канми тăрăшать. Эпир ыйхăран вăраниччен тутлă апат пĕçерсе хурать. Тата вăл çӳç касма ăста. Хитре прическа туса пурне те савăнтарма тăрăшать. Машина çӳретме те пĕлет вăл, – мăнаçланать улттăри Саша Петров.

Саша халĕ Мăн куна хатĕрленме тытăннă. Пĕчĕк витрине йăтса кашни кун чăх йăви патне васкать. Çăмарта пуçтарать.

– Тĕрĕссипе, витрине ăна çăмарта пуçтарма мар, çĕр улми пухма илсе панăччĕ. Кĕркуннечен ĕççĕр ларас килмерĕ. Мăн кунра пирĕн сĕтел те çăмартаран пуян пулĕ. Унсăр пуçне кăлпасси, кулич, кукăль-пӳремеч, пылак кучченеçсем те кĕрекене илем кӳрĕç. Çаксене йăлтах анне пĕçерĕ, – тет Саша.

Арçын ача шкула кайса тарăн пĕлӳ илесшĕн çунатланса пурăнать. Ӳссен вăл полици ĕçченĕ пулса йывăр вăхăтра çынсене пулăшасшăн.

## Вĕсенчен тĕслĕх илĕп

Дима Новожилов çемьере виççĕмĕш ача. Амăшĕ вĕсене пĕччен ура çине тăратассишĕн ырми-канми тăрăшать.

– Атте яланах ĕçлеме çӳренĕ. Ачисене валли укçа ĕçлесе илес тесе ĕмĕтленнĕ. Шел, пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрălса кайрĕ вăл. Эпир ăна питĕ хытă юрататтăмăр. Халĕ вăл аппа мĕн тери хитре юрланине курса килeнеймест. Катя вара хăйне сцена çинче чăн-чăн юрăçă пек тытать. Эпĕ унпа мăнаçланатăп, вăл манăн аппа пулнишĕн савăнатăп. Кăçал мăн кукамай 100 çул тултарчĕ. Ун чухне те аппа ăна пĕр хитре-е-е юрăпа савăнтарчĕ. «Ах, мĕн тери пултаруллă-çке эсĕ, мăнукăм. Манăн кăмăла хăпартлантарнишĕн тем пысăкăш тав сана», – терĕ вăл ăна çурăмĕнчен лăпкаса, – тет Дима кăмăллăн.

Пушă вăхăтра тăваттăмĕш класра вĕренекен Максим пиччĕшĕпе иккĕшĕ машинăпа выляççĕ.



– Аппа та, пичче те пур предметпа та «5» паллăпа вĕренеççĕ. Эпĕ те вĕсенчен тĕслĕх илсе лайăх вĕренсе пырăп, аннене савăнтарăп, – тет Дима хавассăн.

Патăрьел районĕ,
Аслă Арапуç.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13,
VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
А.ТОРГОВЦЕВ

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2327 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1087
Пичете пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

"Атăлпа Урал хушшинчи" проект Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать



# Анлă юхан шыв хĕрринчи шурă Шупашкар

*Çĕр-шыв карттине эсĕ, хаклă тусăм, пĕрре çеç мар уçса пăхнах ĕнтĕ. Унăн сарлакăшĕнчен те, вăрăмăшĕнчен те тĕлĕнни каламасăрах паллă. Карттă çинчи хуласен шучĕ калама çук йышлă пулни те сана та шухăшлаттарнах. Тата сăрт-ту, кӳлĕ, юхан шыв, вĕçĕ-хĕрисĕр вăрман, тинĕс нумайĕн те савăнтарни каламасăрах паллă. Мĕн чухлĕ пурлăх çĕр айĕнче, шывра! Çавăн пек мăнаçлă пирĕн юратнă Тăван çĕр-шывăм! Ăна илем кӳрекенĕ вара – унта пурăнакан, кашни хăйĕн ĕçĕнче ырми-канми тăрăшакан халăх. Крайсемпе облаçсенче, республикăсенче тĕрлĕ халăх çынни туслă та тату пурăнать...*

Паян эпир, тусăмăрсем, Чăваш Республикин тĕп хулипе Шупашкарпа паллашăпăр. Халăхăн мĕн авалтан пыракан йăли-йĕрки пирки те сăмах хускатăпăр. Иртнисĕр пуласлăх çу, çавăнпа пирĕн асаттесемпе асаннесен пурнăçне пĕлмеллех.

**Пире хальхинче çул çӳреве тухма Шурсухалпа Темтепĕлейкин пулăшĕç.**

Тăван республикăмăрăн аякри пĕр районĕн пĕр чăваш ялĕнче пурăнакан Темтепĕлейкин Шупашкара мăн кукашшĕ патне хăнана килнĕ те ыйту çине ыйту парса халтанах янă. Ватă шăпăрланăн кашни ыйтăвнех хуравлама та ĕлкĕреймерен тата ываnса та çитнĕрен арçын ачана хулари хăй пĕлекен чи ватă Шурсухал патне ятарласах илсе кайнă. Мучи хаваспах кĕтсе илнĕ вĕсене. Темтепĕлейкине вара алăран çавăтнă та тӳлеккĕн юхакан Атăл хĕрринчи пĕр мăнаçлă юман патне илсе пынă. «Атя, мăнукăм, çак йывăç айне ларар та шăкăлтатса калаçар, – пуçланă хăйĕн сăмахне Шурсухал. – Май килнĕ тата хам пĕлнĕ таран санăн ыйтăвăрсене хуравлăп...»

«Асатте, мана хам çуралнă тăван ен питĕ кăмăла каять. Унăн тĕп хули Шупашкар та çав тери илемлĕ. Анчах шурă Шупашкарăмăр епле пуçланса кайнине пĕлместĕп. Кĕскен те пулин каласа памăн-ши?»

Шурсухалпа Темтепĕлейкин меллĕн кăна вырнаçрĕç те ватă хăйĕн калавне пуçларĕ.

– Хулан çуралнă кунне йăлана кĕнĕ тăрăх çырулăхра палăртса хăварнинчен шутлаççĕ. Авалхи вырăс летопиçĕсем Шупашкара Иван Дмитриевич Руна çар пуçĕ 1469 çулхи çу уйăхĕнче Хусана Атăл тăрăх кайнипе çыхăнтараççĕ. Анчах вăл хула-ял пек маларах та пулнă пулас. Археологсем çакна хăйсен шыравĕсем хыççăн та çирĕплетнĕ. Историографи йăлипе килĕшӳллĕн, хула 1469 çулта никĕсленнĕ. Ку тĕлĕшпе, мăнукăм, тĕпчевçĕсем хăйсен татăклă сăмахне каламан-ха. Вĕсем авалхи çурт-йĕрсене, çав вăхăтри çынсенчен юлнă япаласене чавса кăларнă тĕслĕхсем Шупашкара XIII ĕмĕртех Сăвар хулинчен куçса килнĕ çынсем никĕслени пирки çирĕплетеççĕ. Чăвашсем Вырăс патшалăхне хăйĕн ирĕкĕпе кĕнĕ хыççăн 1555 çулта Шупашкар уесне йĕркелеççĕ. Çар крепоçĕсĕр пуçне сутуилӳ тумалли майсем те пулаççĕ. IV Йăван пуç пулнă тапхăрта Шупашкар кремльне тăваççĕ. Тĕнĕ ĕненекенсем валли хулара Введени соборне çĕклеççĕ. Шупашкарта шăратса тунă чансем кайран Раççейре кăна мар, Европăра та палăрма тытăнаççĕ.

Суту-илӳ аталанса, православи сарăлса пыни, чăваш халăхĕ тĕне кĕме тытăнни хула илемне лайăхлатасси пирки шухăшламалли çинчен систернĕ. Çавна пула чиркӳсемпе храмсем ытларах тунă. Паян та, акă, эпир халь иксĕмĕр ларакан мăнаçлă Атăл хĕрринчи çырантан инçех мар Введени соборĕ аякранах курăнать. Ăна, мăнукăм, XVII-мĕш ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче тунă. Кирпĕчрен хăпартнă хулари чи пĕрремĕш çуртсенчен пĕри вăл. 1767 çулта Иккĕмĕш Кĕтерне патша Атăл çийĕн пăрахутпа ишнĕ чухне «Чул хуларан пур енĕпе те чаплăскер» тесе хăварнă. Шупашкар пирки Радищев та, Шевченко та



хавхаланса çырнă. Хула илемĕпе ытти çул çӳревçĕ те мухтаннă. Çакна çирĕплетекен истори документĕсем паянхи кунччченех упранаççĕ.

XVII-ĕмĕр вĕçĕнчен пуçласа XVIII-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурриччен Шупашкарта кирпĕчрен нумай çурт-йĕр лартаççĕ. Çапах та йывăç çурт ытларах пулнă. Хулара пушар алхаснă тапхăрта йывăç çуртсем тĕпĕ-йĕрĕпе çунса кĕлленнĕ. 1704, 1720, 1755, 1758, 1773 çулсенче хулара вут-кăвар уйрăмах вăйлă алхаснă. Юлашки пушарта Шупашкар чăннипех те шар курнă: хулан иккĕ виççĕмĕш пайĕ çунса кайнă. Çакăн хыççăн суту-илӳ те вăйсăрланнă.

Вун саккăрмĕш-вун тăххăрмĕш ĕмĕрсенче Шупашкарта промышленноçа мар, суту-илĕве аталантарас тĕлĕшпе ытларах ĕçлеме тытăннаççĕ. Хулара кирпĕч çапакан, тир-сăран, çу ирĕлтерекен, чан шăратакан заводсем хута кайаççĕ. Хулан тĕп урамĕсемпе Хусан, Мускав çулĕсем çине тухма май пулнă.

1920 çулта Чăваш Автономине тунă хыççăн Шупашкар – унăн тĕп хули. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Харьковран тата Мускавран электроаппарат завочĕсене куçарса килеççĕ.

Паян та эпир, хаклă мăнукăм, авалхи çуртсем упранса юлнишĕн чунтан савăнатпăр. Ара, аваллăха пĕлмесĕр малашлăх çук-çке. Вĕсенче хула кун-çулĕ, халăх шăпи. Шел, 1987 çулта Шупашкар ГЭСне тунă тапхăрта Шупашкар тинĕсĕ айне историшĕн питех те хаклă çурт-йĕр шыв айне пулса юлнă.

Эпир хамăр ĕçченлĕхпе мухтанма, мăнаçланма пултаратпăр. Пирĕн тĕп хуламăрăн хăйĕн гербĕ те, ялавĕ те пур. 2001 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнчепе гимн та хавхаланса юрлатпăр. «Шурă Шупашкар» ятлă вăл. Гимн кĕввине Геннадий Максимов композитор йĕркеленĕ. Сăмахĕсене Анатолий Кипеч çырнă.

Мăнукăм, тăван хуламăра юратакан çеç хăй çуратнă, ӳстернĕ, ырми-канми тăрăшнă ашшĕ-амăшне хисеплет, сума сăвать. Çавăнпа та эсĕ те çак маттур çынсен йышĕнче пуласса шанатăп. Хăй çуралнă ене юратакан этем Тăван çĕр-шыва та чыслĕ. Çакна яланах асра тыт, пепкем.

Ав, куратăн-и, хула пристаньне шурă пăрахут та килсе чарăнчĕ. Вăл пирĕнпе Мари Эл республикине ишĕ кĕçех. Тен, эпир те унта çитсе килер мар-и? Хамăр кӳршĕри республикăпа паллашăпăр.

***(Çитес çул çӳрев, хаклă тусăмăрсем, Мари Элта иртĕ).***

## Тăван халăх уявĕсемпе йăли-йĕрки

*Чăваш халăхĕ хăйĕн йăли-йĕркине мĕн авалтан çирĕп пăхăннă. Уявсенче савăннă, тустăванпа тĕл пулнă, канашланă. Паян, шел те, çак питех те хаклă мешехесенчен темшĕн сивĕнсе пыратпăр. Фольклор ушкăнĕсен шайне çеç тăрса юлтăмăр. Калама çук шел.*

Паянхи çамрăксен тăван халăх уявĕсемпе йăли-йĕркине пĕлмеллех тесе шухăшлатпăр. Мухтав турра, ерипен те пулин вĕсем патне каялла таврăнма тытăнкалатпăр.

**Чăваш халăх уявĕсем:** сурхури, нартăван, кăшарни, çăварни, вирĕм (сĕрен), калăм, Мăн кун, ака туй, çимĕк, уяв (çинçе), утă çи, вырма, авăн, чӳклеме.

**Çемье-йăла уявĕсем:** туй, ача çуралнине паллă туни, ниме.

Авалтанах халăх уяв картине тăрса ĕç, уяв, кĕреке, йăла-йĕрке тата ытти юрра юрланă. Уявсене «Ака-суха юррипе» илемлетнĕ.

Çамрăксем çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те йăлана кĕнĕ уявсем ирттернĕ. Çуркуннепе çулла ял е кӳршĕ ял çамрăкĕсемпе пĕрле вăйă картине пуçтараннă. Хĕлле кил хуçи вăхăтлăха çук çурта ларма пухăннă. Хĕрсем çăм арланă, качча́сем килсе çитсен вара вăйăсем выляна, юрланă, ташланă. Хĕл варринче хĕр сăри йĕркеленĕ. Хĕрсем сăра вĕретнĕ, кукăль пĕçернĕ, пĕр киле пухăнса çамрăксен каçне ирттернĕ.

Тĕне кĕртнĕ хыççăн сурхури, çăварни, çимĕк тата ыттисене ирттерме тытăннă.

Суту-илӳ юхăмĕ вăйланнă май тата промышленность, ытти хулапа çыхăну аталанса пынăçемĕн халăх йăли-йĕрки те тĕпрен улшăнса пырать.

Тăхтаса тăмасăр вĕсене упраса хăварасчĕ пирĕн.

## Вĕсем мулран та хаклă

Шăпах çак тĕлĕшпе хавхаланса та тăрăшса ĕçлет **Шупашкар 50-мĕш вăтам шкулта** хула ачисене чăваш чĕлхипе литературине хисеплеме вĕрентекен Мария Николаевна Печникова. Ачасене чăваш чĕлхин çепĕçлĕхне, тăван литература пуянлăхĕн никĕсĕсене алла илме пулăшнисĕр пуçне Мария Николаевна халăх юрри-кĕввин асамлăхне туйма, мăн асаттесемпе мăн асаннесем çирĕп пăхăннă йăла-йĕркене хăнăхтарать. Вĕренекенсем те унăн урокĕсенче яланах тимлĕ. Вăл ертсе пыракан кружока та хаваспах çӳреççĕ. Чи малтанхи утăмсем çăмăлах пулман пулсан, паян учительница ачасемшĕн савăнса та пĕтереймест. «Вĕсем кашни кун мĕн те пулин çĕннине пĕлме тăрăшни мана вăйхăват парать. Ыйтаççĕ, тĕпчеççĕ, çĕннине пĕлме ăнтăлаççĕ, – тет вĕрентекен. – Канмалли кунсенче е каникулта ялсене каяççĕ те аслă ăрурисенчен татах та нумай пĕлсе килеççĕ. Çакă мар-и-ха вĕсен пĕлеслĕх туртăмĕн вучахĕ çунма тытăнни? Çакнашкал ачасем пулсан тăван халăхăмăр йăли-йĕрки пĕтмест. Унăн малашлăхĕ пурах!»

**Сăн ӳкерчĕкре:** «Илемлĕ-илемлĕ чăваш тĕрри», – теççĕ кружок ăстисем.



*Владимир ФЕДОРОВ (тел. 28-83-86) хатĕрленĕ.*

# Класс умĕнче калаçасси хăратать-и?



**Нумай çын умĕнче калаçассинчен хăрани – чи анлă сарăлнă пулăмсенчен пĕри. Хăшĕ-пĕри çакăн пек самант кăна кĕтет тейĕн, хуть те хăш вăхăтра та сăмах илме хатĕр, ку ăна çунатлантарсах ярать. Анчах ун пекки питĕ сахал. Шикленнине пĕтермелли чи малтанхи утăм – çакна йĕркеллĕ пулăм пек йышăнни. «Эпĕ хăратăп, ку яланах çапла», – тесе сасăпах каласан тата аванрах. Таврари çынсем эсир хăранине пур пĕрех асăрхаççĕ-çке. «Класс умне тухсан çухалсах каятăп, пыр та типет. Сасăпа мар, çырса хуравлама мана пин хут çăмăлрах», – тесе ăнлантарма та пултаратăр.**

Шкул ачисенчен ыйтса пĕлер-ха, доска умне еплерех туйăмпа тухаççĕ вĕсем?



**Ангелина Филимонова, 8 класс** (Элĕк районĕ, Питĕшкасси шкулĕ):

– Доска умне тухма пĕрре те хăрамастăп. Тен, кĕçĕн классенче вĕреннĕ чухне пулнă та пуль, халĕ ас тумастăп. Доска умне кăларсран шикленекенсене урока лайăххах хатĕрленме сĕнетĕп. Эпĕ хамăн пĕлӳ çирĕп пулнине пĕлетĕп, çавăнпа нихçан та вĕрентекен ятран чĕнсе кăларасран хăрамастăп.



**Оля Порфирьева, 8 класс** (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси шкулĕ):

– Паллах, эпĕ класс умне тухса калаçма хăратăп. Унчен пĕрре те шикленместĕм, лайăх паллă илес тесе хавхалансах хуравлама тăрăшаттăм. Эпĕ питĕ вăтанатăп, доска умне тухсан та хĕрелсе каятăп. Кайран хумханнине иртерес тесе вĕрентекен сисиччен пит-куçа выляткаласа тантăшсене култаратăп. Пурте пĕрле ахăлтататпăр та манăн хăрани иртсе каять. Ыттисене шантарсах калатăп: нихăçан та ан хумханăр, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать!



**Луиза Анисимова, 11 класс** (Çĕмĕрле районĕ, Çĕмĕрле шкулĕ):

Малтан эпĕ нумай çын умĕнче калаçма хăраттăмччĕ, ыттисем манран кулассăн туйăнатчĕ. Доска умне тухсан мĕн калассине манса кайни те пулкалатчĕ. Халĕ хама алăра тытма вĕренсе çитрĕм. Класри тантăшсемпе эпир пĕр-пĕрне пулăшма яланах хатĕр. Доска умне тухма ан хăрăр! Сирĕнтен кулаççĕ пулсан эсир те пĕрлех кулăр.

Хăранине епле ман ирттерес-ши?
Мĕскер тумаллине пĕлместĕп пач!
Манра, тен, чăх чĕри пуль? Мур илесшĕ!
Тен, эпĕ иртнĕ пурнăçри мулкач?

Тухса калаçасси те чĕрĕ тамăк –
Вĕрентекен пăхать шăтарасла.
Мана доска умне вăл кăларас тăк,
Тухмастăп! Калăп, мĕнле пур çапла.

Вĕрентекен пире сăнать пĕрерĕн –
Никам та калаçма тухасшăн мар.
Пуçа йăтма та хал çитерейместĕп.
«Петрова, – тет хайхи. – Атя, вăр-вар!»

Тĕнче кисреннĕн туйăнчĕ сасартăк.
Аран-аран çĕклерĕм те пуçа:
«Каçарăр, эпĕ сирĕнтен... хăратăп», –
Тесе пĕркелентертĕм пит-куçа.

Çăвар уçса самант хытса та ларчĕ,
Çакна кĕтменччĕ пуль вĕрентекен.
Унчен шăпланнă класс тинех тапранчĕ –
Вĕсемшĕн питĕ кулăшла иккен.

Тинех ак эп те халĕ хăрамастăп.
Вĕрентекенĕ лайăх-çке тата!
Анчах та çав куна çеç манаймастăп –
Туссем ас илтереççĕ, тупата.

## Мĕнрен хăратпăр-ха эпир?

Ытларах чухне – таврари çынсем хак парасран. Ăнсăртран мĕн те пулин тĕрĕс мар калăн та санран кулма тытăнĕç. Е йывăр ыйтусемпе такăнтарса намăс кăтартĕç. Çакнашкал шухăшсемпе асапланакансене ырă хыпар пĕлтеретĕп: ку инкек сире кăна çавăрса илмен, çавăнпа унпа мĕнле кĕрешмеллине те тахçанах шухăшласа тупнă ĕнтĕ. Эппин, ĕçе пуçăнар!

**1-мĕш утăм.** Шикленĕвĕн пĕрремĕш палли – сывлăш пӳлĕнни. Аудитори умне тухсан çак çăмăл хăнăхтарăва тума ан ӳркенĕр: тарăннăн сывласа илсе васкамасăр сывласа кăларăр, çапла темиçе хутченех.

**2-мĕш утăм.** Тĕрев вырăнĕ тупăр. Ура тупанне урай çумне лайăх перĕнтерĕр – хăвăр çирĕп тăнине туйса илĕр.

**3-мĕш утăм.** Темшĕн-çке тухса калаçма хăракана çемçелме сĕнеççĕ. Чылай чухне ку пулăшмасть. Йогăн тĕп правилисенчен пĕрне пурте манаççĕ: çемçеличчен малтан тимлĕхе пухмалла! Эппин, пур вăйран тимлĕхе ӳстерме тăрăшăр: чышкă чăмăртаса ӳт-пӳ вăйĕ килнине туйса илĕр. Çакăн хыççăн тин лăнчăланма юрать.

**4-мĕш утăм.** Именекен ача тухса калаçас умĕн хăйне вăйсăрланнăн туять. «Çитет!» – тейĕр хăвăра. Виçĕ ыйтăва: «Эпĕ кам? Эпĕ ăçта? Эпĕ мĕн тума хатĕрленетĕп?» – ăшра хуравлăр. Тĕслĕхрен: «Эпĕ Петя Иванов. Доска умĕнче тăратăп. Халĕ вара килте вĕреннĕ сăвва каласа паратăп». Çак меслет – чи ăнăçли.

**5-мĕш утăм.** Хăвăр мĕн калассине пĕлмеллех, сирĕнтен ыйтма пултаракан сăвва, теоремăна е правилăна лайăх вĕренмелле. Хăш-пĕр ачасем доска умне тухма хăрани çинчен калаççĕ, хăйсем вара урока пачах хатĕрленмеççĕ. Вĕсен, паллах, класс умĕнче намăс курмалли кăна юлать.

**6-мĕш утăм.** Килти хатĕрленӳ пирки аçăр-аннĕрпе тĕплĕ калаçăр. Çемье вулавĕсем ирттерме юрать. Çемьере театр хатĕрлени тата аванрах. Паллах, ачасем, сирĕн кунта хастарлăхпа пуçарулăх кăтартмалла: килйыш умĕнче сасăпа вуламалла, çемье спектаклĕнче тĕп сăнара калăпламалла.

**7-мĕш утăм.** Класс умĕнче пĕр-пĕр темăпа калаçмалла чухне ан шиклентĕр. Эсир хатĕрленнĕ пулсан, эппин, çак темăна сирĕнтен лайăххах пĕлекен çук.

**8-мĕш утăм.** Эсир калаçнă вăхăтра класри тантăшсенчен пĕри сирĕнпе килĕшменнине хыттăнах пĕлтерет-и? Вĕрентекен ăна чарма та шухăшламасть-и? Хăвăра нимĕн те пулман пек тытнинчен усси çук. Ашкăнчăка тӳррĕнех çапла тавăрăр: «Санăн урăхла хуравлама ирĕк пур. Эпĕ вара хамăн шухăша пĕлтеретĕп». Çакна каличчен тантăша хыттăн та ăнланмалла ятран чĕнме ан манăр. Хăй ятне илтни çынна ирĕксĕрех тыткăнлать, ку тахçанах паллă ĕнтĕ.

**Ачасем, çак сĕнӳсем сире пулăшасса чунтан шанатăп. Вĕсене пурнăçланă хыççăн хăвăра мĕнле туйнине çырса пĕлтерĕр. Ăнăçу сире!**

# Парашютпа та сикĕ вăл!

Арина Андреева питĕ ир, çулталăк та темиçе уйăх тултарсанах калаçма пуçланă. Çакна хăй ăçтан пĕлет-ха? Тĕпренчĕкĕн кашни утăмне сăнама юратакан ашшĕ вăл çут тĕнчене килсенех ятарлă тетрадь пуçланă иккен. Унта хĕрĕ хăçан пĕрремĕш сăмах каланине, шăлĕ шăтма пуçланине, çӳллĕшне тата йывăрăшне йăлтах палăртса пынă. Нумай пĕлме ăнтăлакан хĕр ача шкула кайиччен вулама тата шут йĕркине вĕреннĕ. Ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкĕсене ăслă-тăнлă ӳстерес тесе çирĕп тĕллев лартнă, ахăртнех.

«Пĕчĕк чухне кашни «пиллĕкшĕн» атте-анне пылак çимĕçпе савăнтаратчĕ, – аса илет Арина. – Халĕ вара вĕренни хамшăн пулнине ăнланатăп. Экзаменсене те ăнăçлă тытасчĕ! Вĕсенчен манăн пуласлăх килет-çке». Кашни пулăм тавра тĕплĕ шухăшлама хăнăхнă хĕр ача умри икĕ тĕллеврен хăшне суйламаллине хальлĕхе ниепле те тавçăраймасть. Ухут ветеринар пулма ыйтать-ха, çапах экономист ĕçĕ пĕлтерĕшлĕрех вырăн йышăнассăн туйăнать ăна.

Ырă чунлăскер пĕчĕк чухнех тăвата уралла тусĕсене инкек-синкекрен хăтарма тăрăшнă. Пĕр кушакĕ алăк айне лексе урине хуçсан Арина ăна мĕнле сиплемеллине самантрах тавçăрнă, аманнă вырăнтан çыхса хытарнă. Çапла çăмламас тусĕн суранĕ тӳрленнĕ. Тепрехинче вара юратнă йытти машина айне лексе урине амантнă. Хĕр ача ăна та пулăшу парса ĕлкĕрнĕ.

Чĕр чунсене кăна мар, этемшĕн сиен кăларса тăратман хурт-кăпшанка та хĕрхенет вăл, шыва кĕрсе ӳкнисене пĕрре мар çăлнă. Чун анлăшĕ пĕчĕк ĕçренех курăнать çав. Паян хурт-кăпшанка пулăшакан ыран этемлĕхе те йывăрлăхран хăтарĕ.



Арина ватă çынсене питĕ хисеплет. Вĕсем каласа панине ялан тимлĕ итлет, кайран кирлĕ пĕтĕмлетӳ тăвать. Ĕлĕкхи пурнăç çинчен пĕлме мĕн тери кăсăклă-çке. Вун-вун çултан çав тапхăр пирки кĕнекере çеç вуласа пĕлĕн. Чĕрĕ калаçăва вара мĕн çиттĕр? Ватăсем каласа панинченех ял мĕнле пуçланса кайнине те ăса хывнă Арина. «Историе пĕлни питĕ кирлĕ. Унсăрăн пысăк та чаплă, паттăр ĕçсене те манса кайăпăр. Халăх кун-çулне пĕлсе тăни вара унчченхи йăнăшсенчен те асăрханма пулăшать», – тет çивĕч ăслă хĕр ача.

Вун пĕрмĕш класра вĕренекенскер ку таранччен мĕн тĕрлĕ конкурса, предмет олимпиадине тата спорт ăмăртăвне хутшăнман-ши! Пĕрремĕш класранах футбола юрататъ вăл. Çиччĕмĕш класранпа – шкулти баскетбол командин хастар выляканĕ, халĕ вара капитана çитнĕ. Шкул тĕрлĕрен ăмăртура епле вырăн йышăнасси хăйĕнчен те чылай килнине ăнланать, çавăнпа лайăх выляса ыттисене тĕслĕх кăтартма, хавхалантарма тăрăшать Арина. Спортри çитĕнĕвĕсемшĕн вара Константин Витальевич Громов тренера тав тăвать.

Ăслăлăх фантастики тата мыскараллă халапсем вулама юратакан пике «Гарри Поттер» çинчен çырнă кĕнеке пуринчен ытла килĕшнине палăртать. Ара, унти Гермиона сăнарĕ чунне çывăх-çке, хăй те унпа пĕр еврĕлĕрех вăл.

Иккĕмĕш сыпăкри аппăшĕ Женя халĕ Америкăра пурăнать. Унта сноубордпа ярăнасси анлă сарăлнă. Арина та çак спорт тĕсĕпе туслашасшăн. Хăçан та пулин тĕллевне пурнăçлама тӳр килĕ-ха ăна. Тепĕр ĕмĕчĕ вара – парашютпа сиксе курасси. Ахальтен мар-çке вăл сывлăш десант çарĕсен кунĕнче çуралнă!

«Тăрăшсан пĕтĕмпех пулĕ, тăрăшмасан – нимĕн те», – тет Арина. Ăслă шухăш. Эсир те, ачасем, çак сăмахсене чи курăнмалла вырăна çырса, палăртса хурăр, вĕсем сире йывăрлăха çĕнтерсе çитĕнӳ тума, ĕмĕте пурнăça кĕртме хавхалантарсах тăччăр.

Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм шкулĕ.

Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

# Пĕр тымартан – саккăрăн...

*Римма, Рита, Даша, Руслан тата Лиза кашни кун хавас кăмăлпа шкула васкаççĕ. «Кĕçех çуллахи каникул та çитĕ. Ăна эпир кăна мар, пур ача та чăтăмсăррăн кĕтет. Ун чухне кашни кун килте пулнăран Машенькăпа Сашенька йăмăкăмсем те çав тери кăмăллă пулĕç», – теççĕ çамрăксем хавассăн.*
*Тăвай районĕнчи Элпуç шкулĕнче ăс пухакан Яковлевсене пĕрле вĕренекенсемпе педагогсем те хисеплеççĕ. «Вĕренӳре те хастар, кирек епле ĕçре те пăравур», – теççĕ вĕсем пирки ыррине çеç каласа.*

## Вăл маншăн пурнăç та, хĕвел те...

Пĕрремĕш класри Римма çав тери нумай вулать. Тăхтавсенче вăл яланах вулавăша васкать.

– Анне хаçат-журнал та çырăнса парать. Пирĕншĕн «Теттепе» «Тантăш» – чи юратнă кăларăмсем. Республикăри ачасен пултарулăхĕсемпе паллашсах тăратпăр. Вĕсене кура хам та тавра курăма ӳстерессишĕн тăрăшатăп. Акă нумай пулмасть чăвашла кĕнеке «шĕкĕлчесе» тухрăм. Унти сăнарсем яланлăхах асра юлчĕç. Лайăх калав. Писатель ял пурнăçне аван пĕлни курăнать, – çатăлтатрĕ пĕчĕкскер йăл-ял çиçсе.

Хĕр ачашăн пурнăçра амăшĕнчен хаклă çын çук.

– Анне, аннеçĕм! Эсĕ маншăн – йăлтах, йăлтах: пурнăç та, ĕмĕт те, хĕвел те. Эсĕ, сакăр ачуна, пĕр пек юратни пире çав тери савăнтарать... – тет вăл шкултан таврăнсанах амăшĕ çумне кушак çури пек йăпшăнса.



Спорт передачисене пăхма та кăмăллать пĕрремĕш класс ачи. Ахальтен мар. Хăй те физкультура урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтет. Спортăн кашни тĕсне юратать.

## Ĕçрен хăрамастăп!

Дашăн юратнă ĕçĕ – йăвасенчен çăмарта пуçтарасси.

– Пирĕн килте тăхăр чăх. Кунне вара ултă çăмарта кăна пуçтаратăп, те таçта вăрттăн йăва пур. Пĕлместĕп. Пур ачине те çăмарта çиттĕр тесе анне ыттине лавккаран туянать. Çемье пысăк çав пирĕн. Анне маттур пулнăран пур çĕре те ĕлкĕрет. Урокра эпĕ унăн тутлă кукăлĕшĕн, техĕмлĕ яшкишĕн тунсăхлатăп, – тет Даша пĕтĕм кăмăлтан.

Çуркунне çитнĕшĕн çав тери хĕпĕртет вăл.

– Халĕ картишрен юр та туртас çук. Кайăксем те сивĕпе аптăрамаççĕ. Çакă савăнтарать те мана. Тата та хĕпĕртемелли – кĕçех çулла çитет. Тем тĕрлĕ ĕç пуçланать вара! Çук, эпĕ ĕçрен пĕрре те хăрамастăп. Тĕрĕссипе, ман çума куршанак пĕчĕклех çыпçăннă. Пурнăçра вара хам пек пултаруллă та ĕçчен, сăпайлă та ырă кăмăллă çынсемпе паллашсан яланах чун-чĕререн савăнатăп. Тĕрĕссипе, çак пурнăçра чи хастарри вăл – Руслан пичче. Вăл тума пĕлмен ĕç те çук пулĕ. Кирек мĕнле вăхăт-ра та, кирек кама та сĕнӳ-канаш пама ăста, – мăнаçланчĕ юратнă пиччĕшĕпе Даша.

Хĕр ачан питĕ педагог пулас килет.



Алла аттестат илсен Шупашкарти аслă шкула вĕренме кайма ĕмĕтленет.

– Тепĕр чухне тата лавккаçăра та ĕçлесе курас килет пек. Апла-и, каппа-и, пур пĕрех маншăн. Вăхăт çитсен куç курĕ унта, – тет мал ĕмĕтлĕ Даша хавхаланса.

## Çĕнĕ çурт кăчăк туртать



Виççĕмĕш класри Ритăн та вулас туртăм çав тери пысăк.

– Пире ăс паракан педагогсен кашни сăмахĕпе килĕшетĕп эпĕ. «Вулакан çын çеç нумай пĕлет, тĕрĕс çырать тата хитре калаçать», – тенине епле сивлеме пулать-ха. Çавăнпа вулавăшран тухма та пĕлместĕп. Ача-пăча литературипе паллашма яланах хавас. Унти сăвă-калав кăна мар, ӳкерчĕксем те кăмăла çĕклеççĕ. Хам та ӳкерме ăста, çавăнпа кĕнекери ӳкерчĕксем те маншăн çывăх. Юрать тĕрлĕ тĕслĕ кăранташсемпе альбомсем илсе пама ӳркенмест юратнă аннем, – тет вĕренӳ отличници пĕтĕм кăмăлтан.

Пур предмета та пĕр пек юратакан хĕр ача çыхма та ухута. Паянхи кун унăн парнелĕх сумка хатĕр.

– Хитре кĕпе çыхма кăмăл пур. Рая аппа канмалли куна килсен вĕрентме сăмах пачĕ. Йăмăкăмсене Машăпа Сашăна йăлтăр-ялтăр тумпа савăнтарас килет. Ан тив, пĕчĕкскерсене манран парне пултăр. Пĕлетĕр-и, пире патшалăх уйăрнă укçа-тенкĕпе çурт лартса панă. Ай, питĕ хитре! Манăн хăвăртрах çав пӳрте куçса тухас килет. Хамăрăн халĕ пурăнаканни те лайăххах, çапах çĕнни тата аван пек туйăнать, – тет Рита хавхаланулăн.

## Вутă та хатĕрлетпĕр, милĕк те çыхатпăр



Вăй хумасăр укça-тенкĕ кĕсьене хăех кĕрсе выртмасса тахçанах пĕлет саккăрмĕш класра вĕренекен Руслан.

– Тăваттăра чухне пĕрремĕш хут кĕтĕве тухнине ас тăватăп. Ун хыççăн ял халăхĕн выльăх-чĕрлĕхне укçалла пăхса пама тытăнтăм. Киле нухрат илсе килмессерен анне хавхаланатчĕ. «Маттур, пĕчĕклех ĕçпе пиçĕхсе ӳсни пурнăçра та пулăшса пырĕ кайран», – тетчĕ. Ĕнесемпе танлаштарсан сурăхсемпе çӳреме лайăххах. Шăрăх çанталăкра вĕсем тапăртан тухма та пĕлмеççĕ. Иртнĕ çул нухратне те самаях турăм. Шкул хатĕрĕсем илме аннерен пĕр пус укçа ыйтман. Кăçалхи ĕç укçине те пухса пырасшăн, манăн вĕр-çĕнĕ велосипед илес килет. Пулла çӳреме юрататăп та Вăрмар районĕнчи Арапуç ялĕнчи пĕвене велосипедпа кайсан лайăххах. Сакăр-тăхăр çухрăма кашни кун утасси те çăмăл мар. Пулă тени ир лайăх кĕрет те унччен хăвăртрах çитмелле-çке палăртнă вырăна. Çулла пĕве хĕрринче ларма та вăхăчĕ çукрах, анчах пĕр сехет те пулин вăлтасемпе çыран хĕрринче пулас килет. Ирхи пĕве илемĕ, пулăсем выляни, вăлта хулкки йĕкĕлтесе чӳхенни, тĕл-тĕл шапасем пуçĕсене шыв çине кăларнă май çавра хумсем кăларни – йăлтах-йăлтах кăмăла каять, – тет Руслан.

Арçын ача хăйне вăрман тусĕ тесе шутлать. Авă вăл хĕллесерен вăрмана пăшисем валли ятарласа тăвар хума çӳрет. Пĕррехинче вара кашкăр та курнă вăл. Лешĕ çынсенчен шикленнĕскер каялла çаврăнса чăтлăха кĕрсе çухалнă.

– Çывăххах кунта Кашкăр çырми пур. Ĕлĕк çав вырăнта кашамансем пурăннă тет. Вĕсем вăрман хĕррине тухса уласа ларнă, анчах яла кĕрсе сăтăр туман тет. Çакă ял çыннине савăнтарнă. Ара, выльăх-чĕрлĕхе тĕп туни инкек-çке. Çавăнтанпа çав çырма çак ята илнĕ те. Вăрманта ахаль уçăлса çӳреме те кăмăллатăп. Питрен çулçăсем, туратсем çапăнни, вĕсем çинчи эрешмен картисем çатăртатса татални, çилĕм пек çыпçăнса пит çине, тумтир çине ларни те хăйне евĕр илемçке! – ăнлантарать Руслан хаваспах.

Çулласерен кăмпа-çырла пухма кайасси – уншăн чун иленĕçĕ. Вĕсене вара пурте пĕрле хĕле валли хатĕрлеççĕ.

– Мунча тесен каççах каятăп эпĕ. Çавăнпа вăрманти хăрăк юмансене мунча хутма хатĕрлетпĕр, милĕк хуçма та ӳркенместпĕр, – тет арçын ача хавассăн. – Спорта юрататăп. Тата пурнăçа. Питĕ йĕркеллĕ çын пуласчĕ. Эрех-сăрапа нихăçан та туслашмăп. Пирус сĕрĕмĕпе те пуçа минретес килмест. Аннене пĕрре те кулянтарас марччĕ. Ăна манăн яланах савăнтарас килет. Кĕçех хам та шкултан вĕренсе тухăп. Сварщик професийĕ чуна тыткăнлать. Ман шутпа кирлĕ професси, – тет мал ĕмĕтлĕ арçын ача.

**_Луиза ВАСИЛЬЕВА._**
Тăвай районĕ,
Элпуç.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

САВĂНĂÇ




# «Çĕнĕ ятсен» вĕр çĕнĕ кĕнеки

**«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» («Открываем новые имена») çамрăксен литература пултарулăхĕн регионсем хушшинчи конкурсĕ пирки илтнех-тĕр тантăшăмăрсем. Чăваш Республикин ача-пăча тата çамрăксен библиотекин пуçарăвĕпе 2004 çулта йĕркеленнĕскер пĕлтĕр пиллĕкмĕш хут иртнĕччĕ. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсемпе кăна мар, хăш-пĕр хайлавпа та паллаштарнăччĕ сире. Пултарулăх ăмăртăвне чăвашла тата вырăсла çыракан 30 çула çитмен çамрăксем хутшăнма пултарнă.**

Нумай пулмасть вара çамрăк çыравçăсем питех те савăнăçлă хыпар илчĕç – республикăри тăваттăмĕшпе пиллĕкмĕш литература конкурсĕсене хутшăннă авторсен хайлавĕсем уйрăм кĕнекен кун çути курнă-мĕн. Çак пулăма халалланă уяв ача-пăча тата çамрăксен вулавăшĕнче иртрĕ.

## Иртни тата хальхи

Тӳррĕн каласассăн, тăваттăмĕш конкурса хутшăннисенчен чылайăшĕ хăйĕн сăвви-калавне çак кĕнекере курассине теллеменех те. Ара, ĕç-пуçа пĕтĕмлетнĕренпе самаях шыв-шур юхса иртнĕ. Шкул ўсĕмĕнче пулнисем халĕ вăл е ку вĕренӳ заведенийĕн сукмакне такăрлатаççĕ, ун чухнехи студентсем вара тахçанах алла диплом илнĕ, пĕр-пĕр ĕçре тăрăшаççĕ. Çавăнпах-тăр тăваттăмĕш конкурсра палăрнисенчен чылайăшĕ мероприятие килсе çитеймен.

Тен, шантарнă кĕнеке вăхăтра тухманнипе, е тата урăх сăлтава пула, йĕркелӳçĕсем пĕлтерни тăрăх, пиллĕкмĕш конкурса пурĕ 54 ĕç çеç килнĕ. Вĕсенчен «Проза» номинаципе – 21, «Поэзи» – 31, «Драматурги» – 2. 2008–2009 çулсенче вара 82 ал çыру тăратнă яш-кĕрĕмпе хĕр упраç. Вырăсла сăвă шăрçалакан кашниччех йышлă тăк драматурги анинче тар тăкас текен тупăнман пĕлтĕр. Хаклава тăратнă икĕ пьеса та – чăваш авторĕсен.

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» пиллĕкмĕш конкурс географийĕ ансăрланнине те палăртса хăвармалла. Республика тулашĕнче пурăнакан çамрăк çыравçăсенчен пĕр ĕç те килмен. Чылайăшĕ – Шупашкартан, Патăрьел тата Вăрнар районĕсенчен. Тăваттăмĕш конкурса Санкт-Петербург тата Калуга хулисенчен пĕрер ĕç тăратнă пулнă. Яланхи пекех шкул ачисемпе студентсем – чи хастаррисем; арçын ачасемпе каччăсем вара питех те сахал (те çыравçăн кăткăс ĕçĕпе çыхланасшăн мар ĕнтĕ вĕсем, те хăйсен сăмахне уççăн калама вăтанаççĕ).

«Çĕнĕ ятсем уçатпăр» кĕнекене – Э.Н. Малеева тата О.Л. Матвеева пухса хатĕрленĕ. Ăна пичетлеме Чăваш Республикин Культура министерстви укçа уйăрнă. Шел, тиражĕ пĕчĕк – 300 экземплярпа тухнăскерне лавкка сентрисем çинче вырăнтине кураймăр. Апла пулин те ытлашши пăшăрханма кирлĕ мар – ăна республикăри вулавăшсене çитерме тăрăшĕç.

## Çыравçăсен сăмахĕ

Сăмах май, çӳлерех асăннă конкурса 2010 çулта «Чăваш Ен культури: 2010–2020 çулсем» программăна кĕртнĕ. Пилĕк конкурса пурĕ 527 ĕç килнĕ. Жюри членĕсем çамрăксене саламланă май пуçланă ĕçе малалла тăсмалли, литература хутлăхĕнче палăрас, çирĕпленес тесессĕн çанă тавăрса ĕçлемелли пирки каларĕç. Паянхи яш-кĕрĕмпе хĕр упраçа валли аталанма майсем пуррине те палăртрĕç. Вĕсемпе усă курма çеç пĕлмелле, пултарулăха кунсерен туптамалла. Паллах, ку ĕçре аслă ăру тĕслĕхĕсĕр, тĕревĕсĕр май çук. Авă Чăваш çыравçисен союзĕн ертӳçи Юхма Мишши ачасене кĕнеке кăларма пулăшма хатĕррине евитлерĕ. Ача-пăча тата çамрăксен библиотеки çумĕнче йĕркелеме палăртнă литература студийĕ те вĕренекенсене хавхалантарĕ, çĕнĕ çулсем уçса парĕ. Кружокăн тепĕр паха енĕ – çыракансен пĕр-пĕринпе хутшăнма, пĕр-пĕрин хайлавĕсемпе паллашма май пурри.

## Çамрăксем, сас парăр!

Уяв хуçисем – çамрăк авторсем те парăмра юлмарĕç. Конкурс йĕркелӳçисемпе вĕрентекенĕсене, ашшĕ-амăшне тав турĕç, çырас ăсталăха татах та туптама сăмах пачĕç. Шел те, пурте пухăнса çитеймен мероприятие. Çавăнпа вулавăш ĕçченĕсем аяларах асăннă яшсемпе хĕрсене «Çĕнĕ ятсем уçатпăр» кĕнекене илме ачапăча тата çамрăксен библиотекине пыма ыйтаççĕ. Акă вĕсем: Елена Шленская, Елена Рубцова, Жаннета Никифорова, Анжелика Михайлова, Ирина Степанова, Ксения Князева, Светлана Серебрякова, Ирина Сапожникова, Людмила Лукина, Лилия Тестова, Наталья Медведева, Екатерина Павлова, Евгения Александрова, Анжелика Михайлова, Дарья Иванова, Анна Табакова, Харуко Катото (Анна Иванова), Светлана Батракова, Андрей Ленкин, Светлана Григорьева, Екатерина Тетерина, Виктория Шкалькова.

## Ĕçтешĕмĕре саламлатпăр

Çĕнтерӳçĕсен хушшинче «Тантăш» хаçат корреспонденчĕ Лариса Петрова пуррине палăртма питех те кăмăллă. «Поэзи» номинацире унăн «Ырă шухăш калчи» сăввисен ярăмне çитекенни пулман. Лариса Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Чурпайра çуралса ӳснĕ. Çĕн Атикассинчи вăтам шкулта вĕреннĕ. Ун хыççăн И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологийĕпе культура факультетĕнче ăс пухнă. «Тантăш» хаçатпа ача чухнех туслашнă çамрăк сăвăç. Çавăнпа кĕçнерни куна тата почтальона чăтăмсăррăн кĕтнĕ вăл. Заметкисемпе сăввисем пичетленсессĕн шутсăр савăннă. Халĕ вара çак кăларăмра хăй тăрăшать – Чăваш Енри пултаруллă вĕренекенсемпе тата вĕсен çитĕнĕвĕсемпе, тĕнчери интереслĕ çынсемпе тата пулăмсемпе паллаштарать, ачасен сăввисене пичете хатĕрлет.

Çырас ĕмĕт-тĕллевпе çунатланакан çамрăксене чунтан саламлатпăр! Çĕнĕ вăй-халпа çĕнĕ хайлавсем шăрçалама сунатпăр. Вĕсем çĕнĕ кĕнекере кун çути курччăр, хăйсен вулаканне тупчăр.

*Ольга АВСТРИЙСКАЯ.*

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



*Лариса ПЕТРОВА*

* * *

*Юр кайса та пĕтет-çке часах,*
*Тумтире те çӳхетĕпĕр акă.*
*Çу илемĕ çинчен шутласах*
*Эп калчалăх чечек паян акăп.*
*Ман ăсталăх та çук ун пекех,*
*Хам пĕли-пĕлмиех хăтланатăп.*
*Ĕмĕтпе шăранса çуннипех*
*Хирĕç мар эп пахчаçă пулма та.*
*Ырă шăршă сарса таврана*
*Çу çитсен чечексем çеçкеленĕç.*
*Вĕттинчен, тен, ватти таранах*
*Илеме сăнаса пит киленĕç.*
*Чечексем хушшинчи çумсене*
*Ерипен пĕтерсех тăрăп эпĕ.*
*Хам юратнă ялти çынсене*
*Чечекрен пултăрах ыр хисепĕ...*
*Юр кайса та пĕтет-çке часах.*
*Чĕрере ăшăрах пулĕ акă.*
*Чун илемĕ çинчен шутласах*
*Таврана ырă шухăш эп акăп.*

ЫТАРЛĂН

# Тăвата çурта

Сĕтел çинче тăвата çурта ларнă. Лăпкăн та тӳлеккĕн çуннă вĕсем. Майĕпен ирĕлсе пĕчĕкленсе пынă. Пӳлĕмре шăплăх хуçаланнă. Çавăнпах çуртасем мĕн калаçнине те илтме май пулнă.



Йăлт-ялт çуталса пĕрремĕш çурта сăмах хушнă.

– Эпĕ – Лăпкăлăх. Шел те, çынсем упрама пĕлмеççĕ мана. Сӳнмелли çеç юлать-тĕр манăн. Пĕртенпĕр çăлăнăçăм та çавăнта, – теме ĕлкĕрнĕ кăна, лап! сӳннĕ хайхискер.

– Эпĕ – Ĕненӳ. Анчах эпĕ никама та кирлĕ мар. Çынсем ман пирки нимĕн те пĕлесшĕн те, итлесшĕн те мар. Çавăнпа хам малалла çуннинче ним уссине те курмастăп, – тенĕ иккĕмĕш çурта.

Вăл та çав самантрах пăчланнă.

– Эпĕ – Юрату, – пуплевне хурлăхлăн пуçланă виççĕмĕш çурта. – Манăн та малалла çунма вăй-халăм юлмарĕ. Çынсем пачах хакламаççĕ мана. Юратăва парнелеме те, йышăнма та пĕлмеççĕ, айвансем... – пăшăрханăвне пытарайман вăл.

Çапла ку çуртан та ĕмĕрĕ вĕçленнĕ.

Сасартăк пӳлĕме пĕчĕк ача вирхĕнсе кĕнĕ. Сӳннĕ виçĕ çуртана курнă та сехĕрленсе шикленсех ӳкнĕ вăл.

– Мĕн хăтланатăр эсир? Мĕншĕн сӳнтĕр? Сирĕн çунмалла, çутатмалла! Эпĕ тĕттĕмрен хăратăп вĕт-ха! – тенĕ те макăрма тапратнă шăпăрлан.

Çак самантра тăваттăмĕш çурта хумханса та чĕтренсе хуллен çеç чĕннĕ:

– Ан хăра, ан йĕр, эпĕ çуннă чухне ытти виçĕ çуртана та çĕнĕрен чĕртме май пур. Эпĕ – Шанчăк.

*Вырăсларан*
*Ольга АВСТРИЙСКАЯ куçарнă.*

ПРЕМЬЕРА

# Çемйипех — театра

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ куракансем валли черетлĕ парне хатĕрлет. Пуш уйăхĕн 29 тата 30-мĕшĕсенче, 12.00 сехетре, Петр Ершовăн хайлавĕпе лартнă «Конек-Горбунок» спектаклĕн премьерине çемйипех пыма йыхравлаççĕ сире артистсем. Ара, ку шăпах канмалли кунсене лекет-çке-ха. Эппин, мĕншĕн ачасене уяв парнелемелле, кил-йышпа пĕрле пулмалла мар?

«Конек-Горбунок» – вырăс литературинчи паллă юмахсенчен пĕри. Хайлавра хресчен ывăлĕ, паттăр та хăюллă Иван пирки сăмах пырать. Тĕлĕнмелле ăнăçать йĕкĕте: шăпа ăна шанчăклă ут парнелет. Хăйхискер шик шăхăрсанах тенĕ пек вĕçтерсе килет, ялан пулăшма хатĕр. Темĕн те тӳссе иртерме тивет Иванăн. Çĕр те пĕр тĕрлĕ пăтăрмаха çакланать вăл. Анчах йывăрлăхран тухма кашниччех пĕчĕк çеç учĕ пулăшать çамрăка.

Спектакле юрă-кĕвĕпе пуянлатнă. Артистсен чĕрĕ те ăста вылявĕ самантрах юмах тĕнчине ертсе кайĕ. Петр Ершов произведенийĕпе хатĕрленĕ пьеса авторĕ – Иосиф Трер (Дмитриев). Вăлах – спектакль режиссерĕ те. Ӳнерçи – Ольга Ежкова, композиторĕ – Михаил Смирнов.




Рольсенче: Ольга Почалкина, Венера Пайгильдина Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕсем, Любовь Васина, Сергей Никитин, Людмила Павлова, Владимир Свинцов, çавăн пекех Ольга Мацуцына, Наталья Шамбулина, Николай Тарасов, Виталий Сергеев.

*Ольга ИВАНОВА.*




# ЦСКАра — вунă çул

*Сергей Николаевич Игнашевич – хÿтĕлевçĕ, спортăн тава тивĕçлĕ маçтăрĕ – 1979 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче Мускавра çуралнă. «Торпедо» шкулĕнче ăсталăх илнĕ. Вăл çак командăсемшĕн вылянă: «Спартак-Орехово» Орехово-Зуево (1999), «Крылья Советов» Самар (1999-2000), «Локомотив» Мускав (2001-2003), ЦСКА Мускав (2004 çултан пуçласа паянхи кунччен). 2002, 2005, 2006, 2012\2013 çулсенче Раççей чемпионĕ ята тивĕçнĕ. 2001, 2005, 2006, 2008, 2009, 2011 тата 2013 çулсенче Раççей, 2005 çулта вара УЕФА кубокне илнĕ. Раççейĕн пĕрлештернĕ командинче 94 матч вылянă, 5 гол кĕртнĕ. Вăл – Европăн 2008 çулхи чемпионачĕн пăхăр призерĕ, çавăн пекех 2012 çулхи чемпионата та хутшăннă. 2006 çулта ăна Туслăх орденĕпе наградăланă.*

Çак маттур футболист çинчен мĕн пĕлетпĕр-ха эпир? «Торпедо» шкулĕ арканнăран Эдуард Стрельцов, Валентин Иванов, Валерий Воронин тата Виктор Шустиков пуçарса янă мухтавлă йăлана тăсаканĕ пулма тÿр килмен ăна. Клубри тĕп йышра выляма пултарнăскер тахăш самантра физкультура коллективĕсен ăмăртăвне хутшăнма ĕлкĕрнĕ. Торпедо команди çапларах йĕркеленсе кайнă. Анчах Игнашевич унта нумай тытăнса тăман, 1998 çулта клубри çичĕ юлташĕпе пĕрле çамрăксен «Спартак» командине куçнă. Шăпах çав вăхăтра вăл пĕр матчра икĕ гол кĕртсе хайĕншĕн рекорд лартнă.

«Крылья Советов» клуба куççан пĕрремĕш матч умĕн çамрăк футболистăн ыйхи те вĕçнĕ. «Уралана» хирĕç выляма тивнĕ-çке! Халĕ Игнашевич хуть те хăш халăх хапхаçине те – «Боруссири» Йенс Леманн нимĕçрен пусласа «Шахтерти» Стипе Плетикоса таранах) парăнтарма пултарнине кура çакна ĕненме те йывăр пек. Ун чухне вара çирĕм çулти яш тин кăна çĕнĕ шая куçнă-çке. Епле хумханмăн?

Кăçал Сергей Игнашевич ЦСКА-ра выляма пуçланăранпа вунă çул çитрĕ. Çак вăхăт хушшинче савăнмалли те, хурланмалли те пайтах пулнă. Çапах футбола юратни йывăрлăха парăнтарма, ÿксен çĕкленме яланах пулăшать.

## Кĕпепе çуралнă

2002 çулта Игнашевич ылтăн медале тарпа тата юнпа çĕнсе илнĕ тесен те юрать. Çу уйăхĕн вун виççĕмĕшĕнче «Локомотив»-«Ротор» матчĕн пĕрремĕш таймĕ вĕçĕнче хирĕçлисен тапăнаканĕ Денис Зубко ăна ăнсăртран питрен тапнă. Тăн çухатнăскер тухтăрсем çавăрса илнĕ, васкавлă пулăшу машинипе больницăна ăсатнă. Унта вара çапларах диагноз лартнă: пуç мими чĕтренни тата сăмса хуçăлни. Игнашевич тăвата кун реанимацире выртнă, тепĕр тăххăрăшне – пĕрлехи палатăра. Больницăран кăларнă чухне тухтăр ăна çапла каланă: «Çамрăк çыннăм, эсĕ кĕпепе çуралнă. Пуç купташки çирĕп санăн, унсăрăн... Лайăх генсемшĕн аçу-аннÿне тав ту».

## Кăçалхи чемпионатра Раççей çĕнтерес шанăç пысăк

Иртнĕ çулхи раштав уйăхĕн вĕçĕнче Раççей премьер-лиги çулталăка пĕтĕмлетсен чи палăрнисен шутне Роман Широковпа Александр Кержаков зенитçăсем тата ЦСКА хÿтĕлевçи Сергей Игнашевич кĕнĕ. «Çак награда иртнĕ çулталăка кăна мар, манăн пурнăçри футбол тапхăрне пĕтĕмпех хак панăн туйăнать. Унăн ячĕ те çапларах вĕт: «футбол аталанăвне витĕм кÿнишĕн». Халĕ пурнăçăмра йывăртарах вăхăт пуçланчĕ, килес çул вара ăнăçлă пуласса шанатăп», – тенĕ вăл чыславра.

«Спартака» 0:3 шутпа выляса янине Игнашевич чи ăнăçсăр матчсен шутне кĕртет. Лайăх вылянăн туйăннăран çак парăну командăна питĕ кулянтарнă.

Аса илме кăмăллисен шутĕнче вара – Португалипе Израиль матчĕсем.

Кăçал Бразилире иртекен футбол чемпионачĕнче çĕнтерессе шанать Игнашевич. «Эпир çурма финала тухма пултаратпăрах», – тет вăл. Паллах, кампа выляссинчен те чылай килет.



Мĕн пирки ĕмĕтленет-ха Сергей Игнашевич? Тĕнче чемпионатĕнче гол тапса кĕртме! Эпир те çакна чунтанах шанатпăр!

## Футболистăн чăваш тымарĕсем

Сергей Игнашевич амăшĕ чăваш пулнине пĕлмен çын республикăра çук та пуль? Раиса Герасимовна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тумликасси ялĕнче çуралса ÿснĕ. Футболистăн кукамăшĕ те мăнукĕн кашни матчне телевизорпа пĕр сиктермесĕр сăнать. «Çамрăкрах пулас тăк Мускаври аренăсене те çитĕччĕ», – тет ун пирки тепĕр мăнукĕ, Игнашевичăн иккĕмĕш сыпăкри шăллĕ Сергей Бармин. Кукамăшĕ халĕ вĕсем патĕнче пурăнать-çке. Сăмах май,




Çĕнĕ Атикасси шкулĕнче улттăмĕш класра вĕренекен Сергей мĕн пĕчĕкрен спортпа туслă. Физкультура урокĕсене хаваспа çÿрет, хальччен пĕринчен те юлман-ха.

«Малтан эпир Çĕнĕ Атикасси ялĕнче пурăнаттăмăр, – каласа парать паллă футболистăн шăллĕ. – Каçхи 6-7 сехетсенче ачасем тата аслисем пĕрле пуçтарăнса футболла выляттăмăр. Кайран Вырăсушкăне куçсан кунта та стадион пуррине пĕлтĕм. Анчах вылякансем хушшинче хÿтĕлевçĕсем сахалрахчĕ, ытларах тапăнакансемччĕ. Çапла эпĕ хÿтĕлевçĕсен йышне кĕтĕм. Çак вăйă мана питĕ илĕртрĕ».

Вун икĕ çулта чухне амăшĕ ăна лагере канма янă. Сергей саккăрмĕш отряда лекнĕ. Унта та спорт вăййисем тăтăшах иртнĕ-ха. Хастарскере футболра варринчи çурма хÿтĕлевçĕ пулма суйланă. Кайран киле каяс умĕнхи кун аслисене, пĕрремĕш отряда, хирĕç вылянă вĕсем, 4:2 шутпа çĕнтернĕ. «Çав кун яланлăха манăн асăмра юлчĕ. Пĕтĕмлетÿ хыççăн эпир виççĕмĕш вырăн йышăнни палăрчĕ. Ку вара пирĕншĕн пысăк ÿсĕм», – çав телейлĕ вăхăта тавраннăн каласа парать Сергей. Халĕ вăл юратнă футбол клубĕшĕн, пиччĕшĕ вылякан ЦСКА-шăн «чирлет». Хăй те чаплă футболист пулма ĕмĕтленет. Мĕнех, тĕллев лартса ăна пурнăçа кĕртме тăрăшсан пĕтĕмпех пулĕ. Пирĕн пуласлăх – хамăр алăра. Сергей, сана та ăнăçу сунатпăр!

## Игнашевич Чăваш Енри ачалăхне аса илни

Сергей Игнашевич Белоруссири аслашшĕпе асламăшĕ патне тăтăшах çÿренĕ. Чернобыльте авари пулнă çулхине вара ашшĕпе амăшĕ ăна Чăваш Ене, кукамăшĕ патне ăсатнă. Акă мĕнлерех аса илет паллă футболист çав вăхăта.

«Манăн тантăшсем унта çукпа пĕрехчĕ. Чи кĕçĕнни – аннен шăллĕ, Владик. Вăл манран пилĕк çул аслăрахчĕ, эпĕ ялан унпа пулма тăрăшаттăм. Вăрмана каяççĕ-и, шыва кĕме-и – эпĕ те хыççăнах. Ытти чухне кил çывăхĕнчи пĕвере чăмпăлтататтăмччĕ-ха, унта шывĕ те чĕр куççи таран кăна. Владикпа юлташĕсем кăмăллакан вырăнти чăнкă çыран вара 2-3 метра та çитет пуль. Ыттисем хыççăн эпĕ те шыва сикме шут тытрăм, пĕтĕм вăйран чупса пытăм та – шывалла! Чăмрăм та – унта вара тĕпĕ те çук. Ишме пĕлместĕп. Çырана аран-аран çитрĕм.

Кукамайăн тăхăр ачаччĕ. Аслисем кĕçĕннисене пăхатчĕç. Ял çыннисем ялан ĕçре вĕт-ха. Пĕррехинче вĕсем колхоз хирне тухса кайрĕç, мана килте пĕчченех хăварчĕç. Çак ирĕклĕх мана питĕ килĕшрĕ. Кÿршĕ ачипе кунĕпе выляттăмăр, «Бобик Барбос патĕнче хăнара» мультфильмри пекех. Ют пахчари грушăсене силлесе антараттăмăр, хире пăрса татма çÿреттĕмĕр. Утă уйăхĕн вун тăваттăмĕшĕнче юлташпа манăн çуралнă куна паллă турăмăр, çурт тăрринче унччен пуçтарнă пăрçана çисе лартăмăр».

Çак хăйне евĕр самантсене Сергей Игнашевич паян та ăшă кăмăлпа аса илет.

# Кăштах футбол çинчен



**Футбол («foot» – «ура» тата «ball» – «мечĕк» акăлчан сăмахĕсенчен) – командăпа вылямалли спорт тĕсĕ. Унăн тĕллевĕ – хирĕçлисен хапхине урапа е кĕлеткен ытти пайĕ пулăшнипе (анчах алăпа мар) май пур таран ытларах мечĕк тапса кĕртесси. Футбол историйĕ тахçанах пуçланнă. Сăмахран, Египетра, Германире тата Китайра çавăн евĕртерех вăйăсем пулни паллă. Вĕсенчен чи ăнăçли – гарпастум. Уншăн итальянсене тав тумалла. Акăлчансем шухăшласа тупнă хальхи футбол вăй илсенех гарпастум манăçа тухнă. 1863 çулта пĕрремĕш хут Футбол ассоциацине йĕркеленĕ, правилисене çирĕплетнĕ.**

## Футбол правилисем

Футбол вăййине МАТЧ теççĕ. Вăл икĕ таймран тăрать, кашниех 45-шер минут. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш тайм хушшинче 15 минутлăх тăхтав иртет. Çак вăхăтра командăсем канаççĕ, кайран вара хапхасемпе ылмашăнаççĕ. Футбола курăк е синтетика сийлĕ уйра выляççĕ. Унта икĕ команда хутшăнать, вĕсенче 11-шер çын. Командăра пĕрин – ХАПХАÇĂН – штраф лаптăкĕнче алăпа выляма та ирĕк пур. Унăн тĕп тĕллевĕ – хапхана хÿтĕлесси. Ытти вылякансен те хăйсен тивĕçĕ тата вырăнĕ пур. ХÿТĔЛЕВÇĔСЕМ, тĕпрен илсен, хăйсен енчи уйра выляççĕ. Вĕсен хирĕçле командăн тапăнса выляканĕсене хапха патне ямалла мар.

ÇУРМА ХÿТĔЛЕВÇĔСЕН вырăнĕ – уй варринче, лару-тăрăва кура вĕсем хÿтĕлевçĕсене е тапăнса выляканисене пулăшаççĕ.

ТАПĂНСА ВЫЛЯКАНСЕМ хирĕçлисен çур уйĕнче выляççĕ. Вĕсен тивĕçĕ – гол кĕртесси. Хапхана чи нумай мечĕк кĕртекен команда матчра çĕнтерет.

Футбол – команда вăййи. Çавăнпа вылякансен пĕр-пĕрне ăнланма, пĕрле килĕшÿ тупма пĕлмелле. Хирĕçле командăна пĕччен выляса çĕнтерейместĕн, ушкăнпа вара çакна тума çăмăлрах.

Пурте çĕнсе илме ĕмĕтленекен тĕп кубок вăл – ТĔНЧЕ КУБОКĔ. Уншăн тăватă çулта пĕрре тупăшаççĕ. Паянхи кун тĕнчери футбол чемпионĕ – Испани. Вăл 2010 çулта çĕнтернĕ. Кăçалхи çĕртме 12-мĕшĕнчен пуçласа утă 13-мĕшĕччен Бразилире черетлĕ 20-мĕш чемпионат иртĕ. 2018 çулта вара Раççей те çак пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăмшăн яваплăх илĕ.

Яланхиллех пире вăййипе тата çĕнтерÿ патне ăнтăлнипе хавхалантаракансем пур. Футбол королĕ ята Бразилири Пеле чăннипех те тивĕçлĕ. Пур вăхăтри чи лайăх хапхаçă – пирĕн Лев Яшин. Чи вăйлă футбол клубĕсем – Реал (Испани), Челси (Англи), Барселона (Испани), Зенит (Раççей), Бавари (Германи), Интер (Итали), Арсенал (Англи), Милан (Итали) тата ЦСКА (Раççей).

Эсĕ футболла вылятăн-и? Эппин, санăн шухăшлав, тимлĕх, чăтăмлăх тата хăюлăх аталанать.

Футболла выля, ăна юрат, вара пĕтĕмпех пулĕ!

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Купăста

Акрăм эпĕ аннепе
Купăста çуркуннепе.
Çăвĕпе ăна шăвартăм,
Кĕркунне кăна пуçтартăм.
Шурă, пысăк купăста
Савăнтарчĕ ман чуна.

## Уплюнкка

Уплюнкка вăрманта ÿсет,
Вăл мана пит килĕшет.
Унăн туни вăрăм та çÿхе,
Шлепки вара сунчăк пек хитре.
Юрататăп эпĕ кĕркунне
Вăрманта пухмашкăн вĕсене.

***Полина ПЕТРОВА,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Çуркунне

Хĕрхенмесĕр çĕр çине
Хĕвел пайăркисене
Эх, тăкать те, эх, тăкать –
Çуркуннене йыхăрать.

Тин çеç тухнă чечекне
Лăпка-лăпка ăшăтать,
Çырмари шыв юххине
Выля-выля ăсатать.

Вăш-вăш çилĕ савăнса,
Алхасса та ахăрса
Шур пĕлĕте хăвалать,
Уяррине куç хывать.

Тĕлĕнтермĕш çуркунне
Ырă шăршă валеçет,
Садри улмуççисене
Капăр кĕпе парнелет.

***Ольга МАКСИМОВА.***
Шупашкар,
50-мĕш шкул.

## Çĕр çырли

Çĕр çырлине ачасем юратаççĕ,
Унран варени те тăваççĕ.
Ăна çуллахи кунсенче
пуçтараççĕ,
Кунтăксене туп-тулли
тултараççĕ.

***Настя МИРОНОВА,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Юр ирĕлнĕ чухне

Юлташсемпе урама тухатăп
Çуркунне, юр ирĕлнĕ чухне.
Шыв юхнине сăнатăп,
савăнатăп,
Итлетĕп шăнкăрчсем юрланине.

***Саша АБДУЛОВ,***
***7 «б» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Кăмпа

Упа пырать вăрманпа.
Асăрхать: умра – кăмпа.
Савăнать халĕ упа:
«Çийĕпĕр-çке юлташпа!»

***Артем МОСКАЛЕВ,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Вĕрентекен

Ирхине ирех тăратăп,
Васкаса шкула чупатăп.
Манăн унта юлташсем,
Ырă вĕрентекенсем.

Акă шăнкăрав сас пачĕ
Урока чĕнсе пире.
Вĕрентекен класа кĕчĕ,
Анне пек ырă та хитре.

***Вероника ПЧЕЛИНА,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Савăнатăп

Çуркунне килет,
Савăнас килет!
Çÿлте кайăк вĕçет,
Мана пĕрле чĕнет.

Эпĕ урама тухатăп,
Карапа шыва яратăп.
Юлташăмсемпе вылятăп –
Çуркуннешĕн савăнатăп.

***Семен БАЙТЕРЯКОВ,***
***7 «б» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Вăрманта

Пĕрре тухрăм урама
Йĕлтĕрпеле ярăнма.
Лăпкăн шурăм вăрмана
Хĕл илемне сăнама.

Манран ăсан пытанать,
Пакша мăйăр тутанать,
Тилĕ вăрттăн йĕр йĕрлет,
Мулкач тытма сĕмленет.

Чăрăш шупăр туяннă,
Шурă çĕлĕк тăхăннă.
Хурăн çилпе усăннă,
Хĕл ыйхине параннă.

Çамрăк çăка савăнса
Юмах калать юлташне.
Ăвăс итлет тăнласа,
Ун асĕнче – çуркунне.

Шухă çилĕ тустарать,
Йывăççене хускатать,
Шĕвик-шĕвик шăхăрать,
Чĕр чунсене хăратать.

Эп те утрăм килелле
Каллĕ-маллĕ йĕрпеле.
Курах кайрăм йыттăма,
Хыççăн çÿрет йăпшăнса.



***Настя ВЯЦКОВА,***
***5 класс.***
Йĕпреç районĕ,
Чăваш Тимеш шкулĕ.

## Çеçпĕл

Урамра тăр шыв юхать,
Кайăк вăрманта юрлать.
Юр кайсан пĕрремĕш çеçпĕл
Çут тĕнченелле тухать.

***Настя МИРОНОВА,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Пурнăç илемĕ

Киленетĕп, юрататăп
Эп çуралнă тĕнчене.
Чĕреренех шăрçалатăп
Чунтан тухнă йĕркене.

Савăнатăп-çке, кулатăп
Хĕвел тухнăшăн ирпе.
Сывлăм тăрăх та чупатăп
Вăркăштарса кĕпене.



Тав тăватăп, пуç таятăп
Эп пурришĕн çĕр çинче.
Сывлăша та чуп тăватăп.
Турăçăм, пире пилле!

***Ксения НИКОЛАЕВА,***
***2 класс.***
Канаш районĕ,
Катек шкулĕ.

## Чи хитре çын

Чи хитре çын вăл – анне.
Пĕлетĕр-и мĕншĕнне?
Çăлтăр пекех куçĕсем,
Ылтăн, ĕçчен аллисем.

Ирех тăрать ман анне,
Тем те тума ĕлкĕрет.
Хăй çуратнă ачине
Ырăлăха вĕрентет.

Маншăн ялан кулянать:
Мĕнле çын манран пулать?
Ун куççулĕ те юхать,
Çут тумлам пек туйăнать.

Эсĕ, анне, ан кулян:
Япăх пулмăп нихăçан.
Çиçтĕр куллу сăн-питре,
Савăнтар эсĕ пире.

***Полина ПАВЛОВА,***
***8 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Манăн йăмăк

Манăн йăмăк пĕчĕк мар,
Вулама вăл пит хастар.
Хĕл мучи çинчен вулать,
Ăна питĕ юратать.

Манăн йăмăк ÿркенмест,
Пĕр ĕçе те тиркемест.
Юмахне кăна пуçлать –
Хĕл мучи çинчен калать.

Манăн йăмăк пит ĕçчен,
Ĕç вĕрет ун аллинче.
Ăна пăхса тăракан
Хăй ĕçе пуçăнакан.



***Инесса ГАВРИЛОВА,***
***5 класс.***
Йĕпреç районĕ,
Чăваш Тимеш шкулĕ.

## Ыхра

Юрататăп эп ыхра.
Витамин нумай унра.
Пире ялан пулăшать,
Тĕрлĕ чиртен сыватать.

Кăнтăр Азире ÿсет,
Раççейре те çитĕнет.
Ыхрапа салат тăваççĕ,
Тĕрлĕ апата яраççĕ.

***Мария ДЕНИСОВА,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Хĕл ыйхине çĕнтерсе

Вĕçсе килчĕç кайăксем
Кăнтăр енчен çуркунне.
Ак вăранчĕç йывăçсем
Çĕнтерсе хĕл ыйхине.

Ем-ешĕлех курăксем
Шăтса тухрĕç васкаса,
Ав лараççĕ чечексем
Куçăма йăмăхтарса.

***Таня ЛЕПЕШКИНА,***
***3 класс.***
Комсомольски районĕ,
Хырхĕрри шкулĕ.

## Тутлă-çке!

Анне лартрĕ купăста,
Вăл çитĕнчĕ, ай, ăнса.
Халь çиетпĕр юратса.
Тутлă-çке вăл, тупата!

## Кишĕр

Эпĕ кишĕр юрататăп:
Вăл витаминпа пуян.
Тăтăшах ăна кăшлатăп –
Пулăп сывлăхлă ялан!

***Кирилл МАЙОРОВ,***
***7 «а» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Аннене халалласа

Аннене халалласа
Çак сăвва çыратăп.
Анне патне юратса
Чечекпе васкатăп.

Манăн анне пит хитре,
Пит ĕçчен те пит маттур.
Ирхине ирех тăрать,
Тÿрех ĕçе тытăнать.

Çĕр çинче унран хакли,
Илемли те маттурри,
Сăпайли те хастарри
Çук пуль. Эсир куртăр-и?

***Юлия ИЛЬДЕНЕЕВА.***
Улатăр районĕ,
Суйкăн шкулĕ.

## Чечексем

Вăрманти сулхăнта
Чечексем тунсăхланă:
«Хĕвел, кил-ха кунта,
Савăнтар вăрманта!»

***Настя СТЕПАНОВА,***
***7 «б» класс.***
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

## Ырă çыннăм

Автанран малтан тăратăн,
Эс ĕçлетĕн савăнсах.
Ирхине куçа уççассăн
Эс ларатăн ман умрах.

Ырă çыннăм эсĕ манăн,
Юрататăп эп сана.
Пĕр-пĕр йывăрлăх тухсассăн
Пулăшатăн эс мана.

Кам çинчен эп сăмахлатăп –
Ăнланатăр пуль, шанатăп.
Вăл – анне, юратнă çын,
Тĕнчери чи хаклă çын.

***София МАРКОВА.***
Комсомольски районĕ,
Кĕçĕн Çĕрпÿел шкулĕ.

## Иртсе кайрĕ

Акă хĕл те иртсе кайрĕ,
Çурхи кунсем çитрĕç.
Хĕвел ăшшăн çупăрларĕ,
Питре кулă çиçрĕ.

***Алеша БЫКОВ.***
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç шкулĕ.

## Юратнă ял

Юрататăп эп яла,
Хам çуралнă урама.
Пит илемлĕ çурчĕсем,
Улмуççиллĕ пахчисем.

## Маттур шăллăм

Манăн пĕчĕк шăллăм пур:
Пултаруллă та маттур.
Вăл ура хуçса ташлать,
Çемьене савăнтарать.

***Юля ШЕРБУСТАНОВА.***
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç шкулĕ.

## Çук санран илемли

Анне, анне, аннеçĕм.
Эс маншăн чи хакли.
Çурхи хитре чечек пек –
Санран çук илемли.

***Мария СВЕКЛОВА.***
Комсомольски районĕ,
Нĕркеç шкулĕ.

## Çурхи ир

Сар хĕвел йăл кулнипе
Эп вăрантăм ирхине.
Хăйĕн сутă шевлипе
Ачашларĕ питĕме.

***Никита МАКСИМОВ.***
Шупашкар,
22-мĕш шкул.

## Кашниех халь хĕпĕртет

Хĕлĕн хаяр сиввисем
Хыçа юлчĕç кунсерен.
Çур кунĕсен ăшшисем
Килсе çитрĕç майĕпен.

Ăшă енчен, кăнтăртан
Вĕçсе килчĕç кайăксем,
Хитре саслă пулнăран
Шăрантарчĕç юрăсем.

Ватти, вĕтти, вăй питти –
Кашниех халь хĕпĕртет.
Йăлтăркка хĕвел ăшши
Çĕнĕ вăй-хăват кĕртет.

***Валерия ЧЕРНОВА.***
Шупашкар,
22-мĕш шкул.

## Омонимсем

Кастрюльте вĕрет яшка,
Йытă та вĕрет тулта.

* * *

Эпĕ тăтăм ир-ирех,
Йытă вĕрчĕ питĕ хытă.
Эпĕ чупрăм хирелле,
Çилĕ вĕрчĕ питĕ хытă.

* * *

Акă çитрĕ çуркунне,
Карап ишрĕ кÿлĕре.
Толя тухрĕ урама,
Ишсе пăрахрĕ карапа.

* * *

Пахчара ÿсет салат,
Эсĕ ту унран салат.

* * *

Атте пачĕ аллă пус...
Магазина ярса пус!

***Владимир СОФРОНОВ,***
***5 класс.***
Патăрьел районĕ,
Вăрманхĕрри Шăхаль ялĕ.

## Ача-пăча савăнăçĕ

Çитрĕ кĕтнĕ çуркунне!
Юр пуçларĕ ирĕлме.
Кĕçех урам хушшипе
Шыв пуçларĕ кĕрлеме.

Ача-пăча савăнать,
Тухать урам хушшине,
Çурхи шывпа юхтарать
Хутран тунă киммине.

Аслисем те урамра
Çанталăкпа тавлашаççĕ,
Юрпа час сыв пуллашма
Кĕреçе йăтса тухаççĕ.

***Аня СПИРИДОНОВА.***
Шупашкар,
22-мĕш шкул.

**Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи нумай çамрăк пурнăçне татнă. Арçын ачасем те аслисемпе тан çĕр-шыва тăшманран хӳтĕлесе пуç хунă. Çавăн пек харсăрсенчен пĕри – Леня Голиков.**

# Леня Голиков паттăрлăхĕ




Леня Голиков Псков облаçĕнчи Лукино ялĕнче çуралнă. Тантăшĕсем пекех шкулта вĕреннĕ, ашшĕ-амăшне килти хуçалăхра пулăшнă, таврари ачасемпе туслă пурăннă. Кĕтмен çĕртен вăрçă пуçланнă та арçын ачан çутă та таса ĕмĕтне сӳнтерсе лартнă. Ун чухне вăл вун пиллĕкре кăна пулнă.

Фашистсем яла çавăрса илсен хăйсен «çĕнĕ йĕркине» çирĕплетме тĕв тунă. Çав ирсĕрсене хирĕç кĕрешес тесе аслисемпе пĕрле Леня та партизан отрядне кĕнĕ. Партизансем тăшманăн çар колоннисене тапăннă, пуйăсĕсене сирпĕтнĕ, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене тĕп тунă. Фашистсем вĕсенчен шикленнĕ. Тыткăнри нимĕçсене тĕпченĕ чухне: «Кашни çул кукринче, йывăç хыçĕнче, пӳрт е кĕтес патĕнче вырăс партизанĕсем пур пек туйăнатчĕ. Эпир пĕччен çӳреме те хăраттăмăр, вĕсене вара тытаяс çукчĕ», – тенĕ вĕсем.

Леня Голиков çамрăк партизан та сахал мар çар ĕçĕ пурнăçланă. Пĕри ыттисенчен уйрăмах палăрнă.

1942 çулхи çурла уйăхĕнче Леня çулран инçе мар вăрттăн пытанса ларнă. Сасартăк вăл питĕ чаплă нимĕç машини çывхарнине асăрханă. Çакăн йышшисемпе фашистăн пысăк пĕлтерĕшлĕ çар ертӳçине кăна илсе çӳренине пĕлнĕ вăл, çавăнпа хуть те мĕнле пулсан та ăна чарма шут тытнă. Малтан хурал пуррипе çуккине тĕрĕсленĕ, машина çывхарсан ун енне граната ывăтнă. Лешĕ автомобильпе юнашар сирпĕннĕ. Унтан самантрах икĕ патвар фриц чупса тухнă та Леня патне ыткăннă. Арçын ача хăраса ӳкмен, автоматран пеме тытăннă. Пĕрне тӳрех ӳкернĕ, иккĕмĕшĕ вăрмана чупса тарнă, анчах Леня пульли ăна та хăваласа çитнĕ. Фашистсенчен пĕри Рихард Витц генерал пулнă. Пирĕннисем ун çумĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ документсем тупса тӳрех Мукава ярса панă. Часах Партизан юхăмĕн тĕп штабĕнчен çапла хушу килсе çитнĕ: кăткăс операцие хутшăннисене пурне те Совет Союзĕн Геройĕ ятне памалла! Хутшăнаканĕ вара пĕр... çамрăк Леня Голиков пулнă!

Леня хаклă информаци тупнă иккен: нимĕç минисен çĕнĕ тĕслĕхĕсене сăнласа кăтартни, çӳлтен хушу паракана пĕлтермеллисем, мина схемисен карттисем тата ытти пĕлтерĕшлĕ çар хучĕ.




Çак паттăрла ĕçшĕн Леня Голикова Ылтăн çăлтăр парса чысланă, Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Шел, наградăна илсе ĕлкĕреймен вăл. 1942 çулхи раштав уйăхĕнче Голиков отрядне нимĕçсем çавăрса илнĕ. Хаяр çапăçу хыççăн пирĕннисем урăх района тарма май тупнă. Стройра алă çын юлнă, рации арканнă, патронсем пĕтес патнех çитнĕ. Ытти отрядпа çыхăну йĕркелеме, саппассене тултарма хăтланни партизансене çухатнипе кăна вĕçленнĕ.

1943 çулхи кăрлач уйăхĕн пĕр каçхине Çивĕч Лука ялĕ тĕлне вăйсăрланса çитнĕ çирĕм çичĕ çар çынни тухнă, ял хĕрринчи виçĕ пӳрте йышăннă. Нимĕç гарнизонĕ темиçе километртра вырнаçнăран унран хăрушлăх кĕтмелле мар пек туйăннă. Хăйсене ан асăрхаччăр тесе отряд командирĕ хурал тăма хушман. Ирхине хайхискерсем пулемет сассипе вăранса кайнă – ялта нимĕçсене «каçхи хăнасем» çинчен пĕлтерекен сутăнчăк тупăннă иккен. Вăрмана тарма тивнĕ...

Çапăçура партизан бригадин пĕтĕм штабĕ пуçне хунă. Леня Голиков та çав йышрах.

Атьăр-ха паттăр салтаксене пирĕн çĕрсене сыхласа хăварнăшăн тав сăмахĕ калар! Ачасем те нимĕнрен хăрамасăр фашиста леш тĕнчене ăсатсах пурнăçран уйрăлнă. Асра тытар вĕсене!

***Евгений ФИЛИППОВ çырнине вырăсларан***
***Лариса ПЕТРОВА куçарнă.***

**ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ**

# Чĕр чунсем калаçаççĕ-и?

Калаçакан чĕр чунсем çын пуплевĕнчи пек сасăсене ăнлансах кăлараççĕ-ши е ку евĕрлев кăна? Эсир çакăн пирки шухăшласа пăхман-и? Иккĕмĕшĕ тĕрĕсрех пек те туйăнать. Анчах калаçакан чĕр чунсем шутне сасă кăлараканнисене е хăлаçлану чĕлхипе хутшăнакансене кăна кĕртмелле мар.

Пуплекен чĕр чунсем ытларах кайăксем (попугай, шăнкăрч тата ытти йышшисем), çын евĕрлĕ упăтесем, выльăхсем тата сĕтпе ӳстерекен шыври чĕр чунсем хушшинче тĕл пулаççĕ. Чи паллă тĕслĕхсем: Коко ятлă горилла, Батырпа Косик слонсем, Яша çăхан тата Гувер тюлень.

**1. Коко горилла** 1971 çулхи утă уйăхĕн тăваттăмĕшĕнче Сан-Францискора çуралнă. Унтан ăна Калифорнири пĕчĕк çеç Вудсайд хулине куçарнă. Упăте пурнăçĕн ытларах пайĕ шăпах çакăнта иртсе кайнă.



Коко хăлаçлану чĕлхин (амслен) пин ытла паллине вĕренсе çитнĕ, икĕ пине яхăн акăлчан сăмахне ăнланнă. Çавăнпа чапа тухнă та! Ку ӳсĕмшĕн Стенфорд университечĕн профессорĕ Франсин Паттерсон мухтава тивĕç. Вăл гориллăпа темиçе çул хушши ятарлă тĕпчев программипе ĕçленĕ. Коко вара сасăсене уйăрма тата ăнланма кăна мар, шӳтлеме, хăй мĕн туйни (ырату, тунсăх, шикленӳ, куляну тата кăмăлсăрлăх) çинчен каласа кăтартма вĕреннĕ. Çавăн пекех вăл хăйне тăтăшах «лайăх кайăк» теме юратнă. Коко вилĕм çинчен те кăштах тĕшмĕртнĕ. Питĕ ăслă пулнă вăл.

**2. Косик слон** Сеулти (Корея) зоопаркĕсенчен пĕринче пурăнать. Вăл Корей чĕлхин сакăр сăмахне калама вĕреннĕ. Анчах вĕсен пĕлтерĕшне



ăнланать-ши? Иккĕленӳллĕ. Пуплев вăхăтĕнче слона хобочĕ те пулăшать: хăш-пĕр сасса каланă чухне ăна çăварне чиксе вылятать вăл.

**3. Яша çăхан.** Калининградра ăна пĕлмен çын çук пуль. Аякран килекен хăнасене вăл: «Ну мĕн?!» – тесе кĕтсе илет те лешĕсем шалт аптăраса ӳкеççĕ. Вăл çак сăмахсене питĕ хытă тата кĕтмен çĕртен калать. Çавăнпа зоопарка килекенсем те пĕр хушă ăнран кайнăн, мĕн пулса иртнине тавçăрас тенĕн унталла-кунталла пăхкалаççĕ.

Чап ырри патне çитермест. Пĕр илемлĕ каç кайăка вольер-читлĕхрен вăрласа кайнă. Юрать-ха, çăхана вырăнти хуралçă тупнă та ыррăн-сыввăн каялла тавăрнă. Яша зоопарк хăнисене каллех йăлана кĕнĕ пек: «Ну мĕн?!» – тесе кĕтсе илме тытăннă.

**4. Гувер тюлень** 1971 çулта çуралнă. Пурнăçĕн ытларах пайне «Нью Ингланд» аквариумра irттернĕ. Шăпах çавăнта вăл этем пуплевне вĕреннĕ. Çичĕ çулта тин «калаçма» пуçланăскер вуннăра ирĕккĕнех хутшăнма пултарнă. Хăйне курма пыракансене «Мĕнле пурăнатăн?», «Эсĕ мĕн ятлă?» йышши сăмахсемпе кĕтсе илнĕ. Йăлăхтарса çитерекенсене вара: «Çухал кунтан!» – теме те хăйнă. Гувер вун тăвата çул пурăннă.

Ачасем, килти чĕр чунсене лайăхрах сăнăр-ха. Тен, вĕсем сире темĕн калама хăтланаççĕ? Çак хăнăхăва аталантарсан курсах тăрăпăр акă: сурăхпа е ĕнепе юнашар ларсах калаçма тытăнăр.

Людмила СИМОНОВА

# Пĕчĕк таркăнсем

### Сывă-и, Якуш?

Ку пулсаччĕ каçхине:
Пĕр Милюç текен ĕне
Пачĕ кил-йыша парне.
Амăш ывăлне çулларĕ,
Çепĕç сăмахне каларĕ:
«Эп сана, ман маттурскерĕм,
Чаплă ят паратăп, – терĕ. –
Сывă-и, Якуш, Якушăм?!»
Выртнă хыççăн ку пĕр хушă
Çĕкленет ури çине.
Савнă амăшĕ енне
Тăсрĕ хĕрлĕ тутине.
Савăнать Милюç чунтан,
Сăмахне калать унтан:
«Эс ялан пулатăн тутă,
Сĕтĕм манăн питĕ тутлă.
Çиллĕмре вăл туллиех,
Эсĕ сисрĕн пулинех.
Савăк улăх-çарана
Тухăп-ха илсе сана».

### Вăйланса ÿсет Якуш

Кун иртет те каç иртет –
Вăйланса Якуш ÿсет.
Хам кăна хуçа теейĕн
Вĕçтерсе çÿрет телейлĕн.
Çакăн, йĕкĕр чĕрнеллин,
Темĕн чухлĕ пĕлмелли.
Шыраса тупма ăста та –
Сăмсине чикет таçта та.
Тен, темскер тупайманран
Мĕкĕрет мĕн пур вăйран.
Е каласшăн вăл: «Çук, çук...»
Илтĕнет пире: «Мук, мук...»
Ун çамки мĕнле çамка:
Тухрĕ икĕ мăйрака!

### Кируш – йăр-япăш

Пĕр хĕрарăмăн, Арусăн,
Çитĕнсе пырать Кирушĕ.
Вăл лара-тăра пĕлмест,
Никама та итлемест.
Урине те амантать.
Çамкине кăларнă мăкăль.
Кăшкăрать, пĕрмай палкать,
Калаçасчĕ шăкăл-шăкăл.
Ăс парас килет Арусăн
Питĕ шухă ывăлне.
Сăмахлать унпа вăл уççăн,
Вĕрентесшĕн ыррине:
«Санăн тăнлă ÿсмелле,
Аппалан-ха ĕçпеле.
Йĕркене хăçан кĕрен,
Кĕнеке вула, вĕрен?
Савăк улăх-çарана
Кайăп-ха илсе сана.
Çут çанталăкпа паллашăн,
Кайăк-кĕшĕкпе туслашăн.
Выльăн ирĕклĕ çĕрте –
Перĕнмĕ уру çĕре.
Пĕтĕм ырлăх та телей
Тухĕ тăрĕ сан тĕле».

### Кирушпа Якуш тĕл пулчĕç

Ак çаран. Мĕн чул çеçке,
Кайăксем юрлаççĕ-çке!
Савнăçпа тавралăх тулчĕ.
Кирушпа Якуш тĕл пулчĕç.
Йăл кулса хĕвел савсассăн
Чупрĕç ачасем хавассăн.
Пĕлнĕ тейĕн ĕмĕрнех –
Килĕштерчĕç пĕр-пĕрне,
Якушпа Кируш – йăр-япăш.
(Килĕнче вĕсемшĕн – япăх.
Ырăнта ларма кичем,
Йăлăхтарнă чарнисем.)
Амăшсем канма сĕнни –
Пуш сăмах кăна тени.
Шăрчăк сикнине ак курчĕç,



Çеçкене ĕмет пыл хурчĕ.
Çывăхри вăрман тата
Кăчăк туртрĕ, тупата.

### Уçăлма каяр инçе

Эх, пит ырă!
Сывлăш уçă!
Канасси килет Милусăн.
Ыйхă пусрĕ Аруçа –
Устарать хуллен пуçа.
Илĕртет Якуш: «Кирушăм,
Киленер санпа пĕр хушă.
Аннесем халь сыхă мар,
Уçăлма инçе каяр».
Сиккипе чупсан мала –
Улăх юлчĕ хыçала.
Çул-йĕре пĕр чăтлăх пÿлчĕ,
Вĕсене вăрман тĕл пулчĕ.
Кирушпа Якуш супаççĕ,
Тăвăр сукмакпа чупаççĕ.
Темĕн чул çăра турат
Вĕсене ура хурать.
Çакăнта епле чухлайăн:
Хăш енне кайсассăн лайăх.
Чуп пухса мĕн пур вăя –
Тухнă хурăнсем вăййа.
Тĕм айне те тинкерсем –
Куç хĕсеççĕ çырласем.
Ÿркенмесĕр тĕрмешме
Чĕнтĕр çыхнă эрешмен.
Кĕрлесе çеçке тавра
Çаврăнать тĕкĕл тура.
Пăрăнма хушать çулран.
– Хăрамастпăр-ха унран.
Аннесемсĕр пит аван,
Çук никам та чаракан! –
Якушпа Кируш пĕр ассăр
Сиккелеççĕ кулянмасăр.

### Çул шыраççĕ ачасем

Хĕвеле кăлт туртрĕ анăç,
Кирлĕ пуль ăна та канăç.
Тĕлĕрет вăл шăплăхра.
Иккĕн юлнă чăтлăхра.
Халь вĕсем ытла кичем –
Çул шыраççĕ хайхисем.
Амăшсем патне тухма
Кирлĕ юрăхлă сукмак.
Хуралсах пырать вăрман,
Кун пекки хальччен курман.
Туратсем çула пÿлеççĕ,
Ÿхĕ, тĕрлĕ тăмана
Янратса сĕм вăрмана
Пит хаяр саспа ÿлеççĕ.
Çунатне пĕри çапать,
Кусĕнчен вут-хĕм сапать.
Вăл ытла хăрушă темшĕн
Чĕр чунсемшĕн те çынсемшĕн.
Ваттине те вĕттине
Хăратать-çке каçхине.
Путрĕ сĕмлĕхе вăрман,
Вăхăт çитрĕ кăшкăрма.
Вĕсене кунта кам илтĕ?
Амăшсем инçе-çке питĕ.
Хайсенех кунтан тухмашкăн
Тивĕ ĕнтĕ тăрăшмашкăн.
Аруçпа Милюç вăй-халĕ
Пĕтĕмпех пĕтет-çке халĕ –
Чупкалаççĕ вăрманта:
Пăрупа ача ăçта?
Йывăçсем нимскер чĕнмеççĕ,
Тăррисем çеç силленеççĕ.
Ÿхĕ шăплăха сирет.
Те кулать вăл, те йĕрет?
Çур çĕрте с кăнтăрла
Çурçĕре те кăнтăра
Айванкка ача-пăча
Ăнкарма пĕлмест пачах.
Халсăр юлнă çав таран,
Лап ÿкес пек ураран.

### Аннене итлемелле

Йăлт та ялт сикет пакша.
Ыйтрĕ икĕ апăрша:
«Пирĕн аннесем çÿлтен
Лайăх курăнаççĕ, тен?»
Сарăскер калать чăнне:
«Куç курмасть, – тет, – каçхине.
Ĕнтрĕк çапрĕ вăрмана.
Ĕç нумай кĕтет мана.
Эп каям-ха хăвăртрах.
Ват аннĕçĕм – хăвăлра.
Сывлăхĕ ытла йăваш,
Çÿреймест тухса вăш-ваш.
Мăйăр татрăм, çавăнпа
Питĕ хытă савăнма
Тутлă пулĕ ун апачĕ».
Вăл ик мĕскĕне ăс пачĕ:
«Амăшне ача-пăчан
Итлесех пулать ялан.
Халь ăнлантăр пулĕ хăвăр –
Вăйăран тухать тет вăкăр».
Йăлт та ялт пакша сикет,
Самантрах куçран çĕтет.
Ак ÿсен-тăран йĕпенчĕ,
Сывлăм сырчĕ-çке ăна.
Мăкăртатрĕ пĕр çиллenчĕк
Хăнчăр куçлă тăмана.
Йăлăнчĕç çаксем пĕрех:
«Кăтартсамччĕ çул пире!?
Тĕттĕмре куратăн эсĕ
Лайăххах çутăринчен.
Мĕн ларатăн пĕр чĕнмесĕр
Çÿллĕ йывăç тăрринче?
Пулăшсам кайма киле!?» –
Айвансен йĕрес килет.
Тăм тултармăш тăмана
Тем хăйне хурать мăнна.
Тĕттĕмре вут пуççи пек
Хĕм сапать сив куçĕпе.
«Манăн тытмалла шăши,
Кирлĕ мар, – тет, – çын нуши».

### Тухрĕ тăчĕ мăн чĕр чун

Илтĕнет ак шăтăр-шатăр,
Вăрманта çÿрет пĕр паттăр.
Ик айван пăхать ун-кун –
Тухрĕ тăчĕ пĕр чĕр чун.
«Эсĕ кам? – темле хăрушăн
Янăрать сасси Кирушăн, –
Инкекрен хăтар пире,
Икĕ пĕчĕккĕскере!?»
Лешĕ чарăнса тăрать –
Хай ача пăхма хăрать.
Кун пекки нихçан курманччĕ,
Мăйраки – юман турачĕ.
Вăл ĕне те, ут та мар,
Ун уттийĕ – вут-кăвар.
Чим-ха, ачапа пăрушăн
Кÿлеппи кăна хăрушă.
Чăнлăха туйсассăнах
Пуçарать Кируш сăмах:
«Чухламастпăр-çке çакна,
Эс хуçа-и е хăна?
Аннесем патне тухма
Пултарсамччĕ пулăшма?»
«Айвансем эсир, ачсемĕр, –
Кулчĕ мăн чĕр чун, – пĕлсемĕр,
Эп кунта вăрман патши –
Каласан кĕскен – пăши».
«Эс вăрман патши пулсан
Хăвăртрах пире çăлсам!?» –
Терĕç иккĕн хăрăсах
Савăнса та хăраса.
Леш лăплантарать çапла:
«Пĕчĕк тусăмсем, апла
Васкаса ман хыççăн чупăр –
Аннĕрсем патне çул тупăр».
Çăмăл мар пăши сукмакĕ,
Темĕн чул çаппи, тумхахĕ...
Йывăр мар, паллах, пăрушăн.
Сывлăш пÿлĕнет Кирушăн:
«Ырă пул, вăрман патши,
Ан васка-ха ытлашши, –
Кăшкăрать хыçран ача, –
Вăй юлмарĕ ман пачах!»
Ăнланать пăши çакна –
Панă ик ура çынна.
«Аннĕрсем патне çитерĕп,
Маншăн кансĕр мар ку, – терĕ –
Инкекре сире хăвармăп,
Чыс тени вăл – вăй-хăватăм.
Ман çине вырнаç та лар,
Тыт мăйракаран вăр-вар».
Тупрĕç хайхисем майне,
Туйрĕç туслăхăн вăйне.
Вĕсенчен пăру юлмарĕ,
Нимĕнле чăрмав пулмарĕ.

### Тупăнаççĕ амăшсем

Амăшсем патне васкавлăн
Ярăнса пырать пăши.
Улăхра хÿхлев шăв-шавлă.
Хуйхă-суйхă пысăк-ши?
Сухатсассăн ачуна
Вут тивет, паллах, чунна.
Курчĕç те пепкисене –
Ÿпкелешрĕç кусене:
«Сикрĕр-чупрăр пăлтăр-палтăр.
Каярах таçта çухалтăр?»
«Амăшсем, ан тăвăр айăп?
Тиврĕ вĕсене тÿсме, –
Тет пăши, – мĕскер калайăп,
Пехиллем патвар ÿсме.
Нихăçан çакна ан манăр,
Пур хăрушлăхĕ вăрманăн.
Вылясассăн шăпупа –
Хурĕ тем туса упа.
Ăнсăртран çÿлевĕç, кашкăр
Пултараççĕ тапăнмашкăн.
Çавăнпа аннÿ-аçусăр
Вăрмана ярса ан пусăр».
Вăл пуç тайрĕ те çухалчĕ
Чăтлăха кĕрсе кайса.
Амăшсем ятлаççĕ халĕ
Кусене йĕрсе-кулса.
Таркăнсем пач ÿкĕнмеççĕ:
– Эпĕр айăплă мар, – теççĕ.

Калаçу вĕçленчĕ пирĕн
Кирушпа Якуш тавра.
Тавçăрма ăс ситтĕр сирĕн:
Пулчĕ-çке сăмах çавра.

*Вырăсларан Василий КОШКИН-КЕРВЕН куçарнă.*

Тантӑш 11
12 №, 2014, пуш, 27

# Салтак пурнӑҫӗ

**Калав**

**Геннадий ЭСЕКЕЛ**

**(Малалли. Пуҫламӑшӗ 4-11-мӗш номерсенче).**

Ҫак вырӑнта, Ока юхан шывӗн сулахай енче, совет салтакӗсемпе нимӗҫсен хушшинче питӗ вӑйлӑ ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Япӑх хӗҫ-пӑшалланнӑ салтаксене, вӑйлӑ техникӑллӑ нимӗҫсем хӗсӗрлесе пырса, пиншер хӳтӗлевҫӗн пурнӑҫне татнӑ. Нимӗҫсен тӗллевӗ – Ока урлӑ каҫса Тула еннелле тата Мускав ҫулӗ ҫине тухасси. Вӑрҫӑ тамӑкӗнчен хӑтӑлса юлнӑ ватӑ ҫынсем каланӑ тӑрӑх, ҫак вырӑна «Вилӗм лапамӗ» ят панӑ. Ҫапах та совет салтакӗсем, чӗрӗ юлнӑскерсем, Окан ҫӳллӗ ҫыранӗнче самай вӑхӑт ҫирӗпленсе тӑнӑ. Вӗсене вырӑнти ял халӑхӗ те нумай пулӑшнӑ. Анчах вӑйсем тан мар, нимӗҫ армади Тула еннелле пӗр чӑрмавсӑр ӑнтӑлнӑ. Тургенев усадьбине аркатнӑ. Чаплӑ ҫуртне ҫунтарса ярса флигелӗнче лашасем тытса тӑнӑ. Таврари ялсене пӗтӗмпех ҫунтарса кӗллентернӗ. Вӑрмана тарнӑ халӑх партизансене пулӑшма пуҫланӑ, ҫӗр пӳртсенче пурӑннӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн сывӑ юлнӑ ар ҫынсем шыв хӗрринерех ҫӗнӗ пӳртсем хӑпартса ҫӗнӗ ялсем никӗсленӗ. Анчах ялӗсем питӗ пӗчӗк: чи пысӑккинче те алӑ килӗрен ытла мар. Кунта ҫамрӑксем ҫук тесен те юрать. Пурте хулана тараҫҫӗ. Ялсенче карчӑксемпе икӗ-виҫӗ ар ҫын курӑнкалать. Уйсем ҫум курӑк ӑшӗнче. Армутипе пиҫен хуҫаланать. Снарядсемпе минӑран, гранатӑсемпе бомбӑсенчен тасатнӑ пӗчӗк уйсем курӑнкалаҫҫӗ. Шкул ҫулне ҫитнӗ ачасем ушкӑнпа пухӑнса гранатӑсемпе снарядсем тупса чакаланма пуҫлаҫҫӗ, сирпӗнеҫҫӗ, сусӑрланса юлаҫҫӗ.

Тавралӑхра путӑк-шӑтӑк, окопсем пулнӑ вырӑнсем, бомба-снаряд ҫурӑлнӑ хыҫҫӑн юлнӑ тарӑн шӑтӑксем. Тата вун-вун тӗрлӗ ҫӗр суранӗ. Чуна ыраттараҫҫӗ. Сӑваплӑ ҫӗр-аннемӗр, мӗнпе ҫылӑха кӗнӗ-ши эс турӑ умӗнче ҫак асапа курма? Мӗнле чӑтса ирттернӗ-ши чараксӑр хӑтланӑва?! Ҫӳлти патшалӑхран курса тӑракан хӑватлӑ вӑй та чараймасть-ши этемлӗхе пӗтерме пуҫланӑ усал шухӑшлӑ вӑя?

Ока хӗрринче палаткӑсем картӑмӑр. Кашнинче – тӑватшар кравать. Пӗчӗк йышпа канма-ҫывӑрма канлӗрех. Мина шырамалли приборсене кунӗпе йӑтса ҫӳресе салтаксем ывӑнаҫҫӗ. Эпӗ вӗсен ҫывӑхӗнче, кӗтӳҫӗ вырӑнӗнче.

Тӑван полкри минерсен взвод командирӗ Макаров аслӑ лейтенант – Шупашкар пединститутне вӗренсе пӗтернӗ ҫамрӑк офицер. Елчӗк енчи чӑваш каччи. Унпалан чӑвашла сӑмахлатпӑр.

Каҫа хирӗҫ лагерь вырнаҫса, лӑпланса ҫитрӗ. Повар апат хатӗрлет. Манӑн пуринпе те паллашмалла. Ҫапла йышӑнтӑмӑр: кашни кун ӗҫ хыҫҫӑн Окара ҫӑвӑнмалла. Мунчана пире Орел облаҫне кӗрекен пӗчӗкрех хулана турттараҫҫӗ. Пирӗнтен ытла инҫех мар, вӑтӑр е хӗрӗх ҫухрӑм пухӑнать пулӗ.

Ирхине иртерех вӑранса повара пулӑшма, санитари правилисене пӑхӑнса пурнӑҫлама пикентӗмӗр. Повар ӗҫне кӑмӑлласа йышӑнтӑм – тасалӑха пӑхӑнакан ҫамрӑк пулчӗ. Апат хыҫҫӑн машинӑсемпе чи аякри участоксене илсе ҫитерчӗҫ. Ҫул ҫӳрев «ЧП»ран пуҫланчӗ. Кунӗ хӗвеллӗ, шӑрӑх. Грузовика тент карман. Салтаксем пӗр-пӗринпе шӳтлесе, кулса пыраҫҫӗ. Кӗтмен ҫӗртен икӗ салтак хирӗҫсе кайрӗ. Пӗрин суранӗнчен юн тапса тухрӗ. Васкавлӑн пулӑшу патӑм, нашатырь шӑршлаттартӑм. Тӑна кӗрсе куҫне уҫрӗ. Кабинӑра ларса пыракан офицера ку пӑтӑрмах пирки систерес темерӗмӗр. Суранне пилоткӑпа хупласа иккӗшне мирлештерме тӑрӑшрӑмӑр. Унсӑрӑн ӗҫ ытла шала кайма пултарать.

Минерсем ӗҫе пуҫӑнчӗҫ. Тупнӑ боеприпассене ҫавӑнтах сирпӗтрӗҫ. Таврара ялсем ҫукран хӑрама кирлех мар. Кӑнтӑр апатне каялла таврӑнтӑмӑр. Повар тутлӑ апат пӗҫернӗ – хурламалла мар. Офицерсем те пирӗнпе пӗрлех ҫиеҫҫӗ. Чашӑк-тирӗке вӗретнӗ шывпа, сода шывӗпе ҫуса хутӑмӑр. Ку вӑл кашни кулленхи тасалӑх йӗрки пулмалла тесе йышӑнтӑмӑр поварпа. Ӑна пулӑшма кашни кун черетлесе икшер салтак уйӑратпӑр. Вӗсем ялти ҫӑлран таса шыв кӳрсе килеҫҫӗ, ҫӗр улми шуратаҫҫӗ, чашӑк-тирӗк, кухньӑна ҫӑваҫҫӗ... Эпӗ те пулӑшатӑп.

Кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн каллех аякри участока ҫитрӗмӗр. Чугун ҫул станцийӗ тавра ҫурӑлман икӗ икҫӗр килограмлӑ авиабомба тупрӗҫ салтаксем. Тӗлӗнмелле – вӗсем ҫине этемпе машина мӗнле пырса кӗмен-ха?



Куллен пӗр евӗр ӗҫ. Манӑн та вӗсемпе пӗрлех сыхӑ пулмалла. Тем сиксе тухма пултарӗ.

Вырсарни кун мунча кунӗ тесе йышӑнчӗҫ. Мценск хулине И.С. Тургенев усадьби ҫумӗпе иртсе каймалла. Каялла таврӑннӑ чухне усадьбӑра чарӑнса паллӑ писатель пурӑннӑ вырӑнсене курса ҫӳрерӗмӗр. Хӗрӗх гектар таран парк хӑйӗн илемӗпе тӗлӗнтерет. Пӗчӗк юхан шывран чаплӑ кӳлӗ туса хунӑ, унта кӳкӗрченсем сарӑ тӗспе кӳлле илем кӳреҫҫӗ. Нимӗҫсем усадьбӑна ҫунтарса, ватсаҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Ҫуллахи флигель анчах юлнӑ. Ӑна та тӑшман чыссӑрласа пӗтернӗ.

Флигельти килти архив тексчӗ кӑсӑклантарчӗ мана. Ытти салтаксем экскурсовод хыҫҫӑн малалла кӑшӑлтатса кайрӗҫ, эпӗ ҫав текста вуласа пӑхас терӗм. Унта Тургнен(ей) мӑрса Ылтӑн Уртана кӗрекен Атӑлҫи Пӑлхартан тухнӑ пуян та чаплӑ ҫын хӑйӗн кил-йышӗпе Мускава ҫитсе иккӗмӗш Василипе ҫывӑхланни ҫинчен ҫырнӑ. Турген(ей) мӑрса ячӗ питӗ чӑвашла е ирҫе-мӑкшӑлла илтӗнет. Ҫакӑ мана тарӑн шухӑша ячӗ.

Тургенев усадьбинче эпир сакӑр хутчен пултӑмӑр. Хальччен ӳкӗнетӗп ҫав ҫемье архивӗнчен стена ҫине ҫырнӑ текста хама валли илменшӗн...

Чи аякри участока, вӑрҫӑ хирӗнчен юлнӑ боеприпассене тасатсан хамӑр вырнаҫнӑ тавралӑха тасатма пуҫӑнтӑмӑр. Кашни кун саперсем темиҫе тӗрлӗ ҫӗршер снаряд тупатчӗҫ. Каҫпа ҫын ҫӳремен аякри вырӑнта тӗп тӑваттӑмӑр. Вӑрҫӑ хирне аса илтеретчӗ хӑрушла кӗрӗслетӳ...

Лагерьтен виҫӗ ҫухрӑмри вун икӗ килӗллӗ яла ҫитрӗмӗр. Пӗр кил умне уяв тумне тӑхӑннӑ ҫынсем пуҫтарӑннӑ. Туй пырать. Кил хуҫи – ҫамрӑк каччӑ – авланать. Ҫырӑнса килнӗ хыҫҫӑн пӳрте кӗме хатӗрленеҫҫӗ. Пӳрт никӗсӗ тултанах курӑнать – пушӑ снаряд болванкисемпе виҫшер хутлӑ тӑратса тухнӑскер. Офицер шӳтлесех тӗрӗслесе тухрӗ. Пӗр снарячӗ чӑн-чӑнниех, пемесӗр хӑварнӑскер. Халӑх шуйхӑнса ӳкрӗ, пӳрте кӗме хӑрать. Халӑх пӳртре майласа хунӑ сӗтел-пукана картишне кӑларса туй пуҫларӗ. Офицер асӑрхаттарчӗ: пӳртре ташласан снаряд ҫурӑлас хӑрушлӑх пур. Паллах, ҫирӗм ҫул хушши тӑнӑҫ пурӑннӑ ашшӗ-амӑшӗ асӑрхаман та пулӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑн тунӑ ҫӗнӗ пӳрт никӗсне ҫурӑлман снаряд чиксе лартнине. Халӗ килте пӗччен юлнӑ ывӑлӗн ҫурта пӑсса хӑрушӑ снаряда кӑларса илме, пӳрте ҫӗнӗрен купалама вӑй ҫитермелле. Сахал килӗллӗ пӗчӗк ялта ар ҫын шӑрши те ҫук. Салтаксем пулӑшма сӑмах пачӗҫ. Йышпа пӗр кунрах купаласа пама пулать. Вырсарни кун ирех вӗсен патне ҫитсе кӑнтӑрлана ҫуртне сӳтсе-купаласа та хучӗҫ. Тав туса пӗтерейӗмерӗ ҫамрӑк мӑшӑр.

Таврари пӗчӗк хуторсем Голубочки ял советне пӑхӑнаҫҫӗ. Унта почта уйрӑмӗ те пур.

Почтӑна ҫырусем илме кайрӑм. Черетре чухне пӗр ватӑрах ар ҫын ман ҫине тимлесе пӑхнине асӑрхатӑп.

– Мана паллатӑр-и вара? – шӳтлесе ыйтрӑм унран.

– Паллах палламастӑп. Урӑх енӗпе кӑсӑкланса пӑхса-сӑнаса тӑратӑп.

– Ан шикленӗр, эпӗ диверсант мар, – шӳтлерӗм ҫаплах.

– Эсӗ чӑваш ачи мар-и? Мана ҫавӑн пек туйӑнать, – тӗлӗнтерчӗ вӑл мана.

– Ӑҫтан паллӑ эпӗ чӑваш пулни? – ыйтрӑм унран.

– Вырӑс марри пит-куҫран палӑрать. Сирӗн сӑнӑрта тухӑҫ халӑхӗн сӗмӗ пур.

– Тӗрӗс асӑрханӑ эсир, эпӗ, чӑнах та, чӑваш.

– Апла тухар-ха картишне, манӑн унта юлташ пур. Вӑл ут таврашӗпе аппаланать-ха. Манӑн юлташ чӑваш, сана унпа паллаштаратӑп. Хирӗҫ пулмастӑр-и?

Картишне тухрӑмӑр. Сарӑ сӑнлӑ ар ҫын урапа кӳлнӗ лашине лӑпкаса тӑрать. Ун еннелле утрӑмӑр.

– Санӑн йӑхташ каччи. Минӑсем шырама килнӗ, паллаш, тусӑм, – евитлерӗ вырӑс.

Кӑвак куҫлӑ, сар мӑйӑхлӑ, аллӑсенчен иртнӗ ар ҫын мана алӑ пачӗ. Паллашрӑмӑр. Иванов хушаматлӑ. Тӗл пулушӑн савӑннӑ сар чӑваш мана килне хӑнана чӗнчӗ. Вӑл ӗҫрен кӑнтӑрлахи апата таврӑнать иккен. Паллах, эпӗ те ҫак тӗл пулушӑн чунтан савӑнтӑм. Килӗ-ҫурчӗ унӑн ҫак Голубочки ялӗнчех. Ҫитрӗмӗр. Самай аслӑ ҫурт. Картишӗн тепӗр енче мунча. Асӑрханӑччӗ – харпӑр хӑй хуҫалӑхӗнче кунта никамӑн та мунча ҫук. Чӑваш чӑвашах иккен – килти мунчасӑр пурӑнаймасть. Ҫурчӗ те ытти хуҫалӑхпа танлаштарсан чаплӑрах. Чӳрече хашакӗсемпе хапхана чӑваш тӗррисемпе илемлетнӗ. Пӳртре пире хитре сӑнлӑ вырӑс хӗрарӑмӗ кӗтсе илчӗ. Упӑшки ҫине ыйтуллӑн пӑхса илсен куҫне ман ҫине куҫарчӗ.

– Ку – манӑн йӑхташ, – терӗ чӑваш арӑмӗн ыйтуллӑ сӑнне асӑрхаса. Хӑнана чӗнтӗм. Пире мӗнпе те пулин хӑнала, Меланья.

– Андрей, халех. Ывӑлпа хӗр Тулӑран килсе ҫитрӗҫ. Халь пахчаран чӗнсе кӗретӗп те апатланӑпӑр.

Кӑнтӑрлахи апата ултӑ ачаллӑ ҫемье сӗтел хушшине вырнаҫрӗ. Икӗ хӗрпе тӑватӑ ывӑл телейлӗ чӑвашӑн. Апатланнӑ хыҫҫӑн Энтри пиччепе пахчана тухса тӑван чӗлхепе калаҫрӑмӑр. Вӑтӑр ҫула яхӑн тӑван сӑмах илтмен пулсан та вӑл чип-чипер, яка та таса пуплет. Тӑван чӗлхешӗн тунсӑхласа ҫитнӗ ҫын Канаш районӗнчи ялне вӑрҫӑ пӗтнӗренпе те кайса курман.

– Мӗнле тӳсӗм ҫитрӗ сирӗн хальччен яла ҫитсе тӑвансемпе тӗл пулмасӑр? Вӑрҫӑ чарӑнни ҫирӗм икӗ ҫул вӗт.

Вӑл ман ҫине айӑплӑ сӑнпа пӑхса илчӗ те сӑмахне пуҫларӗ...

– Хамӑн калава аякранах пуҫлас пулӗ, – унӑн куҫӗ таҫти инҫетлӗхе тирӗнчӗ. – Ялта эпир вӑтам хресченсен шутӗнче пулнӑ. Ҫемье пирӗн пысӑк пулман – атте-анне, аслӑ аппа та эпӗ. Аппа ҫамрӑклах аякри яла качча тухрӗ. Ялсенче Сталин репрессийӗ пуҫланчӗ. Пуян ҫынсене Ҫӗпӗре ӑсатма тытӑнчӗҫ, пурлӑхӗсене туртса илсе ялти чухӑнсем пӗр-пӗрин хушшинче пайларӗҫ. Ҫурчӗсене пӑсса колхоз кӗлечӗсем туса хучӗҫ. Черет вӑтам хресченсем патнелле ҫывхарать. Аттепе анне мана, вун пилӗк тултарнӑ ачана, Ҫӗпӗре илсе каяс мар тесе аякри яла качча тухнӑ аппа патне ӑсатрӗ. Каярах пӗлтӗмӗр – пирӗн кил-йыша та тустарса тӑкнӑ. Атте-анне ӑҫта? Тӗлли-палли те ҫук. Ӑсатнӑ. Ӑҫта ҫити илсе кайнӑ вӗсене – пӗлместпӗр. Ҫыру ҫыртарман.

1941 ҫул. Эпӗ вун ҫиччӗ тултартӑм. Вӑрҫӑ пуҫланчӗ. Аппа, ача ҫуратнӑ чухне юн нумай кайнипе вилчӗ. Больницӑна илсе ҫитерейменӗмӗр. Эпӗ йысна килӗнче никам та мар – ют ҫын. Ҫар комиссариатне кайса вӑрҫа яма ыйтрӑм. Илчӗҫ. Канаш станцийӗнче ҫар эшелонӗ тӑрать. Пире, темиҫе ҫӗр ҫынна, Мускав еннелле турттарса кайрӗҫ. Эшелонра пурте тенӗ пек ҫамрӑксем. Мускав хӗрринче пӗр талӑк тӑнӑ вӑхӑтра пире салтак тумӗ тӑхӑнтарчӗҫ. Пӗрер карабин тыттарса икӗ теҫетке пуля валеҫсе пачӗҫ. Кайрӑмӑр ҫав составпах хӗвел анӑҫ еннелле. Белоруссие ҫитеспе нимӗҫ самолечӗсем тапӑнма пуҫларӗҫ. Турра шӗкӗр – пӗр бомба та пирӗн эшелона лекмерӗ. Белорусси ҫӗрӗнче нумай тӑрасси пулмарӗ. Нимӗҫ ҫарӗ пире питӗ вӑйлӑн хӗссе пырса Мускав еннелле хӑваларӗ. Танксене хирӗҫ карабинпа, пулеметпа кӑна тӑраймӑн. Пирӗн командовани темиҫе батальон салтака Мускавран кӑнтӑр еннелле, Орел хули патне хӳтерчӗ. Ока хӗррине ҫитрӗмӗр. Начар хӗҫ-пӑшалланнӑ совет салтакӗсене кунта та куҫ уҫтарми хӗсӗрлерӗҫ. Ока шывӗн сулахай енче пирӗн салтаксем пиншерӗн выртса юлчӗҫ. Тӗлӗнмелле – мана ҫаплах пӗр пуля та хӑваласа ҫитмерӗ-ха. Ока шывӗн чӑнкӑ ҫыранне сахаллӑн каҫса юлтӑмӑр. Ку вырӑнтан нимӗҫсене хирӗҫ тӑма питӗ меллӗ. Чылай вӑхӑт ҫирӗпленсе тӑтӑмӑр. Йыш та нумайланчӗ. Ҫӗнӗ вӑйсем ҫитрӗҫ. Хӗҫпӑшал хутшӑнчӗ. Нимӗҫсем пӗр тапхӑр шӑпланчӗҫ. Салтаксем Ока ҫывӑхӗнчи ялсене кайса ҫӳреҫҫӗ, вӗсем хӑйсем те мӗн пуррипе пулӑшаҫҫӗ. Эпӗ те Меланья ятлӑ чипер хӗрпе паллашрӑм. Сисетӗп: вӑл мана юратса пӑрахрӗ. Нимӗҫсем каннӑ вӑхӑтра хӗрпе курнӑҫма вӑхӑт тупӑнсах пычӗ.

Тӑшмансен шӑплӑх вӑхӑчӗпе усӑ курса хамӑрӑннисем самай пулӑшу тупса пире хӗҫ-пӑшаллантарчӗҫ. Пулеметсем, снарядсем, гранатометсем... Артиллери те вӑйланчӗ. Сасартӑк нимӗҫ пирӗн енне урса кайса бомба, снаряд тӑкма пуҫларӗ. Юхан шыв тепӗр енне пире хирӗҫ шучӗ ҫук танк, йывӑр орудисем пырса ҫитрӗҫ. Пире куҫ уҫтармаҫҫӗ. Ока урлӑ каҫма понтон кӗперсем хывма хӑтланаҫҫӗ. Пирӗн вӑйсем чакса пыраҫҫӗ. Орудисене снаряд-бомбӑсем ҫӗмӗрсе пӗтерчӗҫ. Пулеметран персе выртнӑ вӑхӑтра ҫывӑхра нимӗҫ снарячӗ ҫурӑлнине ас тӑватӑп...

**(Малалли пулать).**

# Пирĕн хăна – «Тетте», «Самант» журналсем

ÇĔНТЕРŸÇĔСЕМ

## Пĕр чарăнми!




Ачасен пултарулăхĕпе ÿнерĕн Пĕтĕм тĕнчери «Чунга-чанга» фестивалĕн ячĕ сумлă. Аслă уяв асамçи – президенчĕ – Юрий Энтин хăй мĕне тăрать! Эпир ачалăхра унăн сăвви-семпе çырнă юрăсен ăшшипе çитĕннĕ, пирĕн мăнуксем те çав юрăсенех юрлĕç. Фестивалĕн пĕлтĕрхи ярăмне Раççейри 17 регионран, тĕнчери 15 çĕр-шывран хут-шăнчĕç – пурĕ 30 пине яхăн ача. Пĕлтĕр çулталăк вĕçĕнче Мускав облаçĕнчи Клин хулинче фестивалĕн Пĕтĕм Раççейри конкурсĕ вĕçленчĕ. Чăваш Енрен те пул-таруллă ачасем хутшăнчĕç çав тупăшăва.

Паллашăр: Канашри 5-мĕш шкулти «Нон-стоп» дуэт. Вут та пăрăç хĕр-упраç: Юлия Петрова тата Кристина Александрова. Ертÿçи – музыка учителĕ Наталия Демина. Шкулта 17 çул ĕçлет, кунĕн-çĕрĕн ачасемпе. Вĕсем тĕлĕнтернĕ те ĕнтĕ Клинра «Чунга-чанга» халăхне тата жюри членĕсене.

Пĕтĕм Раççейри тупăшăвăн аслă тÿри-сем çамрăк талантсен ăсталăхне «Аслă ÿсĕмри ушкăн – 14-18 çулсенчисем» номинацире 1-мĕш вырăнпа палăртнă. 1-мĕш степеньлĕ дипломпа пĕрлех «Нон-стоп» дуэта Раççейĕн вĕренÿпе наука министерствин пултаруллă çамрăксене хавхалантаракан Патшалăх премине илме тăратнă. Юрă-çемĕпе чуна тухат-лакан хĕрсене сăмах парар.

– Эпĕ – Юля Петрова. Юрлама ача садĕнчех тытăннă. Ун чухнех: «Шанăç паракан хĕр ача», – тесе калатчĕç. Шку-ла кайсан та тÿрех сцена çине тухнă. Музыкăна вĕрентекенпе эпир хула тата республика шайĕнчи конкурссене хатĕр-ленеттĕмĕр. Шкулти нихăш мероприяти те эпĕ хутшăнмасăр иртмен. 2011 çулта Канашри 5-мĕш шкула вĕренме куçрăм (унччен 9-мĕшĕнче ăс пухнă). Манăн юратнă юрăçсем тата ушкăнсем: Алина Варна, «Елка», «Время и стекло», Иван Дорн, Макс Корт, «Evanescence», Adele, Demi Lovato, «ABBA», Medina. Юрлама кăна мар, кĕнеке вулама та юрататăп. Чи кăмăллакан кĕнеке – Сьюзен Коллинзăн «Выçă вăйăсем» трилоги. Пуша вăхăта туссемпе, шăллăмпа ирттеретĕп. Пурнăçра чĕрĕ те хастар пулмалла. Ăмăртусене, олимпиадăсене хутшăнатăп. Апатçимĕç пĕçерме те ÿркенместĕп. Манăн юратнă апат – Украина борщĕ тата Вăтам Ази пловĕ.



– Эпĕ вара Кристина Александрова. Садикра чухнех юрă пуçараканниччĕ. Шкулта та калаттăм, вокал ăмăртăвĕсене те хутшăнаттăм. 1-мĕш класранпах шкул хорне çÿренĕ, пĕччен те юрланă, чăваш юррисене те шăрантарнă. Шкулти мероприятисене яланах хутшăнатăп, хула тата республика конкурсĕсенче те пулатăп.

Наталия Евгеньевна пире Юльăпа иксĕмĕрĕн пултарулăха мала хунăран – «Нон-стоп» дуэт йĕркелерĕ. Ăнăçлă пулса тухрĕ. Пĕлтĕр эпир республикăри «Чăваш ахах-мерченĕ» конкурсра мала тухрăмăр. Çавăн хыççăн «Чунга-чанга» фестивалĕн гала-концертне чĕнчĕç. Пирĕн пултарулăха фестиваль президенчĕ Юрий Энтин пысăка хурса хакларĕ.

– Çамрăксен Патшалăх премине илме тăратни – пысăк чыс!

– Преми илме тăратас шухăш «Авалхи карман-килте» («В старинном замке») юрăпа çыхăннă. Петр Чайковский кĕввипе Юрий Энтин сăвă çырнă, çавна юрларăмăр. Пирĕн пултарулăха хаклакансем профессионаллă ăсталăхшăн преми илме тăратма сĕнчĕç.

Манăн юратнă юрăçсемпе ушкăнсем: Алина Варна, Типшĕм Сашук, Алина Выйгетова, «Елка», «Время и Стекло», Иван Дорн, Макс Корт, «Пара Нормальных», Adele, Pentatonic, «ABBA».

Ташлама, баскетболла выляма юрататăп. Вулама, апат пĕçерме те кăмăллатăп. Тĕрлĕ конкурса, мероприятие хаваспах хутшăнатăп. Юльăпа иксĕмĕр шкулта е хулари Культура керменĕнче иртекен уявсене тăтăшах ертсе пыратпăр.

«Нон-стоп» дуэтăн пултарулăх шайне, профессионаллă ăсталăхне вут та пăрăç пикесене Пекина чĕнни те уççăн кăтартать. Китай Халăх Республикинче çамрăксен фестивалĕ иртмелле, 35 çĕр-шывран пуçтарăнаççĕ яшсемпе хĕрсем. Китайра та хăйсен пултарулăхне тивĕçлĕн кăтартма пултарасса иккĕленмеççĕ Юльăпа Кристина. Инçет хĕвел тухăç çулне кайса килме вара пĕр хаклă чăрмав пур: нухратçă – спонсор – кирлĕ. Ăнланмалла, инçет вĕçевлĕ «Boeing-777» аэробус вичĕ хут сиччĕпе чăваш чунне çывăх пулин те – Пекина ахаль лартса каймасть. Канаш хули ырă кăмăллă çынсемпе пуян иккенне шанаççĕ-ха «нон-стопсем».

Йĕркеллех пулать! «Самант» хастар та хавхалануллă пикесене пысăк çитĕнÿсем, манăçми çĕнтерÿсем сунать!

***Олеся ВОИ.***

**Сăн ÿкерчĕкре:** «Нон-стоп» дуэт: сулахайри – Юля, сылтăмри – Кристина.




ВĂЙĂ-КУЛĂ КАРТИ

**Çак фигурăсенчен хăшĕ тем пек çаврăнсан та ыттисенчен уйрăлса тăрать?**




*Ольга ГЕРАСИМОВА*

**Чĕрĕпе пан улмисен ушкăнне пĕр пек тăвата пая уйăрма пулăш. Кашни пайра виçшер пан улми юлтăр.**



*Ксения КОШЕЛЕВА*

## Ырă упа

(Юмах)



Пураннă, тет, пĕр сĕм вăрманта пысăк та хăюллă упа. Унран пĕтĕм чĕр чун хăраса тăнă. Унăн кăмăлĕ лайăх пулнă, анчах утаманран темшĕн пурте хăранă, ăна курсанах кам ăçта пĕлет, çавăнта тарса пытаннă.

Пĕррехинче упа çырлана кайма тухать те тилĕ мулкач çурисене хăйне хирĕç йăтса пынине курать. Пĕчĕкскерсем кăшкăраççĕ, макăраççĕ, амăшне чĕнеççĕ. Анчах чее тилĕ вĕсене пур пĕр вĕçертмест. Тутине çеç чеен çуласа пырать. «Тилĕ тус, вĕсем халь пĕчĕк. Мана пар, эпĕ хам патăрта усрăп, пăхса ÿстерĕп, кайран вара сана каялла тавăрса парăп», – тет. Тилĕ нумай шухăшласа тăмасть, мулкач çурисене çав самантрах упа-утамана тыттарать. Лешĕ çавна кĕтнĕ çеç тейĕн. Мулкачсене илет те амăшне кайса парать. Вăрăм хăлха савăннипе упана тав туса пĕтереймест, тем пек савăнать.

Çак самантран вăрман чĕр чунĕсем упаран хăрама пăрахаççĕ. Тилĕ вара никама та шанми пулать.

***Катя ПЕТРОВА.***

Шупашкар районĕ,
Ишек вăтам шкулĕ.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
Мининформполитики Чувашской Республики
предоставляет
в аренду помещения на 6 и 7 этажах
здания редакционно-издательского корпуса,
расположенного по адресу: Чувашская
Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13,
для использования под офис.
Со всеми вопросами обращаться в 616 каб. или
звонить по тел. 89674780612, 56-00-67.
Администрация